К84.09(=Чув)
Э53
Ч-38439

ЯЛАВ БИБЛИОТЕКИ

№ 1



Валентина ЭЛЬПИ

# ВУНТĂВАТТĂ ТУЛТАРАС УМĚН

Чăвашгосиздат
Шупашкар — 1959

Национальная библиотека ЧР
4-038439

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ

обозначенного здесь срока

К84.09 (=Чув)
Э53

ЯЛАВ БИБЛИОТЕКИ № 1

ВАЛЕНТИНА ЭЛЬПИ

# ВУНТĂВАТТĂ ТУЛТАРАС УМĔН

*Повесть*

Кр

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1959

*ВАЛЕНТИНА ЭЛЬПИ*

*Валентина Андреевна (Андреева) Эльпи Тăвай районĕнчи Кив-Пуянкассинче, хресчен çемйинче çуралнă. Кавалти (Вăрмар районĕ) 8 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухсан медицина техникумĕнче, Чăваш педагогика институтне кĕме хатĕрлекен пайĕнче, партипе хаçат шкулĕнче вĕреннĕ. 1941 çултанпа коммунистсен парти членĕ. Хаçатсенче, радиора ĕçленĕ. 1952 çултанпа вара Чăваш радиокомитетĕнче ачасем валли паракан передачăсен редакторĕнче ĕçлет.*

*Валентина (Андрееван) Эльпин журналсенче калавĕсем тăтăшах пичетленеççĕ. 1956 çулта унăн Чăвашгосиздатра «Куçса çӳрекен çурт» кĕнеке тухнă. Кăçал унăн «Аппапа пĕрле» кĕнеки тухать.*

4-38439

...ИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

Редактор *Г. Ефимов.*

НТ 02001. Подп. к печ. 18.II.1959 г. Формат 70×108 1/32 Объем 1,37. печ. лис.
Заказ № 159. Тираж 1700. Цена 50 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.
г. Чебоксары, Володарского, 5.

ПРОВЕРЕНО
20 10 13 СЕН 2017

## ВУНТĂВАТТĂ ТУЛТАРАС УМĔН

### Шкула пырсан

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа митинга пухăнтăмăр. Пин те тăхăрçĕр аллă саккăрмĕш-аллă тăххăрмĕш вĕренӳ çулĕ. Эпир, саккăрмĕш класа вĕренме килнисем, пурте пĕр ушкăнра, пĕр ретре тăратпăр. Кашнин кăкăрĕ çинче ВЛКСМ значокĕ кĕркуннехи хĕвел çутипе йăлтăртатать.

Çĕнĕ вĕренӳ пуçланнă ятпа ачасене саламланă май, директор пирĕн çине пăхса илет те мухтама тытăнать:

— Иртнĕ çулхи çиччĕмĕш, кăçалхи саккăрмĕш класс — пултаруллă класс,— тет,— комсомолецсен класĕ. Пурин те вăл класран пример илмелле.

Пирĕн çине ачасем ăмсанса пăхаççĕ, уйрăмах кăçал çиччĕмĕш класра вĕренме тытăнакансем. Вĕсем комсомола çитес çул çеç кĕме пултараççĕ. Çĕнĕ устав çапла хушать — комсомола вунпилĕк çул тултарнă çамрăксене илмелле. Ахалех ăмсанаççĕ. Çамрăк пионерсене вĕренме, ĕçе хăнăхса пыма лайăх йĕрке — виçĕ сыпăк туса панă. Эпир вара, вунтăваттă тултарас умĕн комсомола тивĕçлĕ пулассишĕн çапла ĕçлерĕмĕр, вула малалла, тен, хăвна кирлине мĕн те пулин тупăн.

### Çухалман-ши?

Эпĕ илĕм-тилĕмпех вăрантăм. Ара мĕнле çывăрса выртăн çакнашкал кун! Пĕрре те çурхи каникул çитнĕшĕн мар, пирĕн Эвăпа иксĕмĕрĕн Миккине ăсатмаллаччĕ. Çакăн пек чаплă, ĕмĕр асра юлмалли кун ăна ялтан мĕнле пĕччен кăларса ярăн? Эпир вĕт унăн çывăх юлташĕсем. Çавăнпа ăна шоссе çулĕ çине кăларса, автобус çине лартсах ятăмăр.

Ăçта кайрĕ-ха пирĕн тус? Район центрне. Райкомола. Акă ăçта. Мĕнле ĕçпе? Комсомол билечĕ илме! Ă-ăт.

Микки, Микки, мĕнле телейлĕ ача. Телейлĕ кăна мар, пултаруллă вăл. Комсомола кĕме ăна дружина хăй рекомендаци пачĕ. Сборта ун çинчен сӳтсе яврăмăр. Никам та тивĕçсĕр, тесе

калакан пулмарӗ. Пурте ырӑпа туха-туха калаҫрӗҫ. Маттур, ӗҫе юратакан, лайӑх вӗренекен ача пулнине палӑртрӗҫ. Ку чӑнах та тӗрӗс. Эпӗ — Миккин юлташӗ — Авель — ҫакӑн ҫинчен ӗнентерсех калатӑп. Кӑҫал хӗлле тӗлӗнмелле ӗҫ пуҫарса ячӗ вӗт вӑл — Микки. Эпӗ пулсан ӗмӗрне те аса илес ҫук.

— Эпир — пионерсем. Пирӗн яланах халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшмалла,— терӗ Микки пӗррехинче сборта ачасен умне тухса.

— Тархасшӑн,—тавӑратпӑр ӑна.— Кам хирӗҫлет. Ӗҫ кӑна паччӑр.

— Апла пулсан кӗҫӗр, урамра ҫын ҫӳреме пӑрахсан, пӗр вӑрттӑн ӗҫ тӑвӑпӑр.

— Мӗнле вӑрттӑн ӗҫ?

Темӗн чул ыйтсан та Микки шарламарӗ. Мӗнпур сӑмахӗ те ҫак ҫеҫ пулчӗ:

— Патне ҫитсен хӑвӑрах курӑр. Малтанах калатӑп, питӗ пархатарлӑ ӗҫ. Ялйыш тав туса ҫитереймӗ.

Ял-йыш... Х-хӑм... Тӗлӗнмелле. Мӗнле вӑрттӑн ӗҫ пулма пултарать? Ялйыш тав тӑвать пулсан, мӗншӗн вӑрттӑн ӗҫ вӑл? Пирӗн шухӑш-кӑмӑлсене ку пӑчӑртасах лартрӗ. Ҫакнашкал илӗртмӗш япаларан камӑн пӑрӑнса юлас килтӗр.

Калаҫса татӑлтӑмӑр: кашни килтех хӑй ҫути сӳнсен (ку ӗнтӗ ҫынсем пурте ҫывӑрма выртнине пӗлтерет), пирӗн шкул умне пухӑнмалла. Хамӑрпа тимӗр кӗреҫе е лум, е шӑпӑр илмелле. Ҫывӑрса юласран пилӗк ҫынран штаб уйӑртӑмӑр (мӗншӗн тесен пирӗн отрядри пионерсем пилӗк урамра пурӑнаҫҫӗ). Штаб начальникӗ — Микки. Ял лӑпланнине штабӑн сӑнамалла. Ачисене мӗнле систермелле? Штаб членӗсем шӑкӑртма илсе урам тӑрӑх шӑкӑртаттарса тухаҫҫӗ.

Эпӗ ӑна-кӑна кӗтмерӗм. Асатте ҫывӑрма выртсанах килтен ерипен тухса шӑвӑнтӑм. Манашкаллисем татах тупӑннӑ иккен. Шкул умӗнче — ҫур отряд. Чӳречерен йӑлтӑртатса курӑнакан ҫутӑсем сӳнсе те ҫитеймерӗҫ, ачасем пухӑнма та ӗлкӗрчӗҫ. Никамӑн та урам тӑрӑх шӑкӑртмапа ҫӳреме тивмерӗ.

Кӗтнӗ вӑхӑт ҫитрӗ. Эпир строя тӑтӑмӑр. Кашнин аллинчех мӗнле те пулин ӗҫ хатӗрӗ. Колонна тапранса кайрӗ. Ӑна малта Микки ертсе пырать. Утатпӑр, хамӑр ӑҫта каяссине пӗлместпӗр. Ҫырма хӗрринелле пыратпӑр. Умра тарӑн вара анса каякан пусма. Ҫырма тӗпӗнче хӗлле те, ҫулла та типме пӗлмен вӑйлӑ ҫӑлкуҫӗ палкаса выртать. Пӗтӗм ялйыш шыв ӑсма ҫакӑнта ҫӳрет. Пӗртен-пӗр ҫӑл вӑл пирӗн. Урӑх нимле, ишӗлнӗ тараса та пулин ҫук. Юрать-ха кӑҫал колхоз ҫынсене тарӑн вара шыв патне анса хӑпарма пусма туса пачӗ. Самаях ҫӑмӑлланчӗ.

Хайхи пусма патне ҫитсен Микки колоннӑна стоп! чарчӗ.

— Ачасем, эпӗ сире ҫак картлашкасене тасатма илсе кил-

тём. Куратăр-и мĕнле тумхахланса кайнă? Хирĕçместĕр пулсан, ĕçе кӳлĕнĕр,—хушрĕ.

Тупата, маттур мар-и-ха ĕнтĕ Микки?! Эпĕ хам çак пусма тăрăх аннă чух миçе хут чикеленсе ӳкмен-ши? Витри унталла, кĕвенти кунталла сирпĕнет. Картлашки пăрлă, тумхахлăран ӳкетĕн. Ун çине юр çăбать, витререн шыв чӳхенсе тăкăнать... Пусмана килсе тасатма ку таранччен никам та ăс çитереймен. Пирĕн юлташ Микки вара ăс çитернĕ.

Йышпа ĕç кал-кал каять. Эпир туххăмрах тасатса антăмăр. Ачасем тăвайман ĕç мар вĕт. Кашни пионера виçшер картлашка çеç тиврĕ. Эпир çирĕмĕн, картлашки — утмăл.

Киле эпир пурте çĕкленнĕ кăмăлпа салантăмăр. Паха ĕç тунă хыççăн ыйăхĕ те питĕ тутлă-мĕн. Ирхине анне калаçнине илтсе вăрантăм.

— ...Сăвап пултăрах вăл çынна. Çăл хĕрне анмалли картлашкана тап-таса шăлса тасатнă.

Çакăн хыççăн пирĕн отряд утмăл картлашкаллă пусмана шефа илчĕ те ăна кун сиктерсе тасатса тăма тытăнчĕ.

Ăслă çын мар-и ĕнтĕ пирĕн юлташ Микки? Çавăнпа та рекомендаци панă чух сборта тухса калаçакансем пурте тенĕпе пĕрех ырларĕç. Пĕр Эва çеç Миккин çитменлĕхне кăтартса пама хăйрĕ.

— Микки чăнах та ĕçе юрататъ. Ачасене ĕçе кӳлĕнтерме те пĕлет. Отлично вĕренет,—тет Эва.—Ку — унăн лайăх енĕ. Анчах та унăн çитменлĕхсем те пур. Комсомола кĕрекен пионерăн хăй çеç отлично вĕренни сахал. Унпа партта урлă ларакан Çемук начартарах вĕренет. Ма пулăшмалла мар?

Кам, кам, эпир Эва çапла вирлĕн каласса кĕтмен. Пĕтĕм ĕçе пăсса хума пултарать. Капла комсомола илмĕç тата. Хăйсем мĕн пĕчĕкренех пĕрле çӳреççĕ. Çывăх туссем. Микки хăйне килти мĕн чухлĕ ĕçе тума пулăшать. Мĕншĕн çакăн çинчен каламасть вăл? Пĕррехинче, астăватăп-ха, амăшĕ чирлесен (Эвăн ашшĕ çук, вăл фронтра вилнĕ), Микки Эвăпа çуна туртса вăрмана вутта кайрĕ. Эль шывĕ урлă каçсан Тĕмпек тăвайккине хăпарма пайтах тапаçланмалла. Тиенĕ йывăр çунашкана туртса улăхма ун чухне хам та хирĕç тухрăм. Киле çитсен вăшвашах Микки пăрахса тухса каймарĕ. Пуртă илчĕ те çăтăрçапла ваклама тытăнчĕ.

— Çитĕ сана кун чухлĕ пулăшнипе,—чарасшăн пулчĕ ăна Эва. Лешĕ шӳтлерĕ кăна:

— Хĕрачасем йывăр ĕç тусан ванаççĕ, вĕсем çепĕç чечексем...

Çакăн пек ырă çынна Эва сборта намăса яма тăчĕ. Сăмахне питĕ вăйлă пĕтерчĕ:

— Комсомолецăн кристал пек тап-таса пулмалла, ун çумĕнче ним çитменлĕх те ан курăнтăр.

Микки çав тери кӳренет пулĕ тесеттĕмĕр. Çук, критикăна йышăнчĕ. «Тĕрĕс калать. Çитменлĕхсене пĕтерме сăмах паратăп», тет. Пулать кам çын.

Ав, сăмах çинех, Эва хăй те ман пата çитрĕ. Алăка шаккаса кĕрет. Пӳрте кĕнĕ-кĕмен, мана васкатма тытăнчĕ:

— Авель, атя хăвăртрах.

Эпĕ кантăкран хĕвел çине пăхса илтĕм.

— Иртерех мар-и? Кăнтăрла та çитмен. Çав териех хăвăрт параççĕ тетĕн-и билет?

— Унта тивĕçлĕ çынна пĕрре пăхсах пĕлеççĕ. Алă тытса саламлаççĕ те, пулчĕ те, билета тыт,—тет Эва.

Эва мана Миккине хирĕç тухса илме чĕнет. Мĕнле-ха унсăрăн? Çын районтан комсомол билечĕпе таврăнать-çке.

Килĕшетĕп, кая юличчен маларах çитни аванрах пулĕ.

Эпир ĕнтĕ шоссе çинче. Кĕпер çине утса кĕтĕмĕр те, карлăк çумне тайăнтăмăр. Чĕнместпĕр. Çырмара, кĕпер айĕнче, явăнса, кăпăкланса, шарласа çурхи шыв юхать. Шырлан хĕрринчи вăтă йăмрасем тăрринче, папка кăларма ĕлкĕреймен, çара туратсем хушшине çавăрнă йăвисенче кураксем краклатаççĕ. Тӳперен хĕвел хĕртсе пăхать, путех тарăн варсенче выртакан юр куписене ирĕлтерсе пĕтересшĕн-тĕр. Хĕвел ăшшине туйса улăхра симĕс курăк сăмсаланни курăнать.

Тăрсан-тăрсан автобусĕ çитсе чарăнчĕ. Алăкĕ уçăлнă-уçăлман Микки сиксе тухрĕ, çил пек пирĕн пата ыткăнчĕ. Çитрĕ те пире лăскама, ыталама пуçларĕ. Хăй хаваслă, кăшкăрашать, кулать. Сарă кăтра çӳç пайăркисем хăйĕн картус айĕн çамки çине ункăн-ункăн тухса выртнă. Унăн хумханса тарланă хыççăн е вĕтĕ-вĕтĕ çăвакан çумăра лексен çӳçĕ çапла илемлĕн кăтраланать. Çу-ук, эпĕ ăна кунашкал савăнăçлине нихçан та курман. Пирĕн тӳсĕм çук.

— Кала часрах, пачĕç-и?

— Илтĕн-и? — ыйтатпăр, сăрпаланса.

— Пачĕç! — илтетпĕр пĕр хушă тĕркĕшсе айкашнă хыççăн.

— Кăтартсам хăвăртрах?

— Кăлар часрах!

Микки тăпах чарăнчĕ. Вăл мана çак хушăра темле татах ӳснĕн, çан-çурăмĕ сарăлнăн туйăнчĕ.

Тинех шалти пиншак кĕсъинчен сăмса тутрипе чĕркенĕ япала туртса кăларчĕ. Тем ванас пек, питĕ асăрханса сăмса тутри кĕтесĕсене пӳрне вĕçĕпе тыта-тыта сирчĕ. Куратпăр. Унăн ывăç тупанĕнче, шурă сăмса тутри çинче, тĕттĕм хĕрлĕ питлĕ пĕчĕк кĕнеке! Хуплашки çинче — Ленин силуэчĕ.

— Билет! Комсомол билечӗ! — терӗ вӑл ҫав тери чӗререн тухакан ӑшӑ сасӑпа.

Миккине эпӗ ҫав тери ӑмсантӑм. Унӑн пӗчӗк кӗнеки мана чунтан илӗртет. Сисетӗп, ӗмӗтри тӗллевсем патне илсе пыракан ӗ шӑпах ҫав ӗнтӗ. Анчах та вӑл мана, темшӗн тивессӗн туйӑнмасть.

Тус пӗрре пӑхсах пирӗн хуйхӑсене ӑнланчӗ пулас.

— Ытлашши ан кулянӑр. Вунтӑваттӑ тултарсан, эсир те акӑ, комсомола кӗрӗр, сире те ҫакӑн пек хаклӑ билет парӗҫ,— тет.

— Хӑҫан ҫитес-ха? Килес ҫул тин,— хурланса калать Эва.

Менельник кунӗ ман хамӑн та инҫе-ха, ҫулла тин. Ҫапах та ӑшӑмра савӑнӑҫ хӗлхемӗ йӑлт-йӑлт сиксе илет.

Халӗ пирӗн ҫав тери Миккин билетне алра тытса курас килет. Чӑваш тытса, хыпашласа пӑхмасӑр ӗненмест, лӑпланмасть, теҫҫӗ те, тӗрӗсех пулӗ ҫав. Ҫу-у-к, Микки пире яхӑнне те ямасть. «Юрамасть», тет вӑл. Хайхискер мӑнаҫлӑн хуплашкине уҫрӗ. Шалта Миккин хушаматне, ятне, «1956-мӗш ҫул, апрелӗн 8-мӗшӗнче панӑ», тесе ҫырнӑ. Мӗн тери вӑл телейлӗ. Вӑл — комсомолец! Пирӗн шкулти чи пирвайхи комсомолец! Микки билетне мӗнле кӑларчӗ, ҫавнашкалах тирпейлӗн чӗркесе чӗре тӗлӗнчи шалти кӗсъине чикрӗ. Тинех килелле утма тытӑнтӑмӑр. Пыратпӑр, пыратпӑр та тӑпах чарӑнса тӑратпӑр. Виҫҫӗмӗр те пӑшӑрханатпӑр. Ах, ҫухалман-ши? Комсомолец чи хаклӑ, чи паха япалине — билетне тӗрӗслет. Йӑпӑр-япӑрах аллине чӗре тӗлӗнчи шалти кӗсъине чиксе ярать, унтан йӑл кулать. Харӑсах ӑнланатпӑр, билет кӗсъерех.

— Комсомол билетне, куҫа сыхланӑ пек, упрамалла,—тет Микки.

## Микки ӗмӗчӗ

Ҫуркуннехи каникул часах иртрӗ. Эпир каллех шкула пухӑнтӑмӑр. Вӗренӳ ҫулӗ пуҫламӑшӗнче кӑна пирӗн класс ачисем пурте хӗрлӗ галстук ҫыхса ҫӳретчӗҫ. «Пионерла класс», тетчӗҫ пирӗн класс ҫинчен. Халӗ вара Миккин, хӗрлӗ галстук вырӑнне, кӑкри ҫинче «ВЛКСМ» тесе ҫырнӑ пилӗк саспаллиллӗ значок, ҫӑлтӑр евӗр йӑлкӑшать. Эпир, пионерсем, вырӑн тупаймастпӑр. Микки ӑҫталла, эпир те ун хыҫҫӑн кӗшӗлтететпӗр. Значокӗ ҫине куҫ илмесӗр пӑхатпӑр. Ӑнланатӑп, пурте ӑмсанаҫҫӗ. Ара кам комсомола юратмасть пулӗ? Аванах пӗлетпӗрҫке: комсомол вӑл пионерӑн аслӑ пиччӗшӗ. Пиччӗшӗ пулмасӑр. Комсомолецсем-ҫке, пин те тӑхӑрҫӗр ҫирӗм иккӗмӗш ҫул, майӑн вунтӑххӑрмӗшӗнче, хӑйсен конференцинче пур хуласемпе ял-

сенче те пионер отрячĕсем йĕркелеме йышăннă. Йышăнна та—ĕçне тунă. Пионерсем халĕ, эпир ав, епле йышлă. Тата миçе хут илтмен-ши эпĕ çапла каланине: комсомол Коммунистсен партин шанчăклă шăлнĕ. Вăл çав тери пысăк вăй, хăй тавра союзра тăман мĕнпур çамрăка пĕтĕçтерсе тăрать. Комсомол кирек хăçан та парти шанса панă ĕçе хĕрӳллĕн пурнăçласа пырать.

— Çавăнпа та комсомола Тăван çĕршыв хисеплет,—тет Эва ман шухăша çирĕплетсе.—Миçе орден унăн, астăватăн-и, Авель?

Астумасăр. Микки билетне куртăмăр-çке: Ленин орденĕ кăна миçеччĕ!

Комсомол партин шанчăклă шăлнĕ. Мĕнешкел чаплă.

— Апла пулсан пирĕн Микки те партин шăлнĕ-и? — ыйтатăп эпĕ Эваран.

— Шăлнĕ,—тет вăл ĕнентерӳллĕ çирĕп сассипе. Мĕн тери пысăк çын пирĕн юлташ Микки! Пĕр шухăшласан ун патне çывхарма именмелле пек. Анчах та, темшĕн эпир Эвăпа иксĕмĕр халичченхинчен те çывăхрах туятпăр ăна, унтан хăпма пĕлместпĕр. Микки çумĕнче пире темле шанчăклă, ăшă, кăмăллă пек.

— Илесчĕ темиçе ачана комсомола, вара шкулта хамăрăн комсомол организаци пулĕччĕ,—ĕмĕтленет Микки.

Ун ĕмĕтне пирĕн питĕ пурнăçлас килет. Анчах мĕнле? Пире çамрăк теççĕ. Улттăмĕш класра çеç вĕренетпĕр-ха. Часрах хуть аслăрах класа куçасчĕ, вара хут кайĕччĕ. Шкулта пирĕн класс чи асли, çичĕ çул вĕренмелли шкул тин çеç уçнă. Ку ним те мар-ха, комсомола кĕме çул çитменни пĕтерет. Пур пирĕн Çемук. Вăл вунтăваттă тултарнă. Комсомолец пулма пултарнă. Шел, ăна пĕр тикĕс лайăх вĕренменшĕн илмен. Темшĕн, пĕрре чиперех урок каласа парать, «тăваттă! илет. Тепĕр чухне тем пулать, хап! «иккĕ».

— Класра комсомол организаци тăвасчех,— лăпланаймасть Микки.— Организаци пулсан пирĕн пурнăç питĕ селĕм пулĕччĕ. Ун чухне эпир пысăк ĕçсем çавăрттарăттăмăр.

Мĕнле пысăк ĕçсем çавăрттарассине тĕпĕпех ăнлансах çитейместĕп, тĕтреллĕн çеç, аякран çеç чухлатăп. Темле пысăк стройка пирки пулĕ. Халĕ радиопа та час-час ун çинчен калаççĕ. Çĕршывра комсомолла стройкăсем пур, теççĕ. Миккине манăн организаци тума питĕ пулăшас килет. Ăна комсомолецсем кирлĕ.

— Эва,— тетĕп,—санпа иксĕмĕр эпир аван вĕренетпĕр. Çапла-и?

— Вара мĕн?

— Мӗнле мӗн? Пире комсомола илме пултараççӗ.

— Эх, айван та иккен эсӗ, Авель,—тет Эва, ман çине пăхса.— Комсомол уставне пачах та пӗлместӗн иккен.

— Пӗлетӗп те-ха. Райкомола каяс. Ӳкӗтлес. Шкулта комсомол организаци кирлӗ тес, пирӗн пысăк ӗçсене çавăрттармалла тес. Ирӗк парӗç.

Эва тавлашкаласа илнӗ хыççăн килӗшрӗ. Вара уроксем хыççăн Эвăпа район центрне, райкомола кайрăмăр. Миккине систермерӗмӗр. Райкомолта комсомола кӗме ирӗк илсе килсе, савăнтарма шутлатпăр ăна.

«Вунтăвата çула çитни çеç те сахал. Комсомола кӗме тивӗçлӗ пулас тесен, лайăх вӗреннисӗр пуçне обществăлла-усăллă ӗçре хăвăрăн пултарулăха кăтартмалла, туссем» — терӗç пире райкомолта.

Хурланса тухрăмăр. Эва та, эпӗ те шарламастпăр. Шухăша путнă. Хамăр пултарулăха мӗнле кăтартмалла-ши?

Анăçсăр çулçӳрев пирки Миккине каламарăмăр. Мӗншӗн çынна вырăнсăр хурлантарас. Ӗмӗтне пурнăçа кӗртме нимпе те пулăшаймастпăр вӗт.

### Ç е м у к к о м с о м о л е ц п у л м а л л а х.

— Эсир мана организаци тума пулăшма пултаратăр,—тет пире Микки. Хӗпӗртесе ӳкрӗмӗр. Хуштăр çеç, пысăк сăрта ӳпне-питне йăвантарса ярăпăр.

— Эпир хатӗр,—пӗлтеретпӗр Эвăпа иккӗн хамăр шухăшсене.

— Çемук комсомолец пулмаллах. Пирӗн ăна пулăшмалла,— пăт татса хучӗ.

Каларӗ те. Ара эпир ăна пулăшман мар-çке.

— Çапах та эпир унăн тарçисем мар, пӗрмаях пулăшма... Юлхав вăл,—терӗм алла сулса.

— Эх, пӗр-пӗрне мӗнле сахал пӗлетпӗр эпир, Авель,— тет Микки.— Май пулсан начар вӗренмӗччӗ вăл.

Эпир виççӗмӗр те, тăкăрлăкра пыраканскерсем, пахча карти çумӗнче выртакан пӗрене купи çине кайса лартăмăр.

Микки Çемук мӗншӗн начар вӗреннин сăлтавне пӗтӗмпех тӗпчесе пӗлнӗ.

Çемук урăх ялта пурăнать. Уроксем хыççăн килне çӳрет. Кунне каллӗ-маллӗ хутласа сахалтан та вунвиçӗ-вунтăватă çухрăм утать. Апла пулсан вăл ӗшенет, çын машина мар-çке. Çавăн чухлӗ утма вăхăт мӗн чухлӗ кирлӗ тата? Урока хăçан хатӗрленмелле?

— Акă ăçта сăлтав,—ăнлантарать Микки.

— Кам айăплă Çемук хăйсен ялне çӳренĕшĕн, хваттер илтĕр те — пурăнтăр.

— Эх, Эва, калама çăмăл,—пӳлчĕ ăна Микки.—Хваттершĕн укçа тӳлемелле-и? Тӳлемелле. Питех пĕлессӳ килсен калам: унăн та санăнни пекех ашшĕ çук, пирĕн телейшĕн фронтра пуç хунă.

Эва хĕрелсе кайрĕ. Хама та ырă мар пек туйрăм, çĕрелле пăхрăм. Çапах та ыйтрăм:

— Мĕн тумалла-ха эппин? — сасă хамăн шăппăн та чĕтренерех тухрĕ.

— Çемука пирĕн хваттер тӳлеме укçа тупса памалла.

Ах, хăямат çынни, каларĕ-тĕк訂 каларĕ. Ара, ăçтан тупмалла ăна? Мана килтисем ĕмĕрне те пĕр пус ытлашши укçа парса курман.

— Кам сана килтисенчен илме хушать,—сиввĕнрех каларĕ Микки.—Ĕçлесе тупмалла.

Тӳрех калатăп. Ку тарана çитсе те аллăмра хам ĕçлесе тупнă укçа çур пус та пулман-ха манăн. Ухута пысăк, ĕçлĕттĕм, анчах пĕчĕк тесе ĕç патне ямаççĕ. Шутласан чистиех тарăхмалла. Тата иккĕленетĕп, ĕçлесе тупнă укçана çынна парас килĕ-ши? Кино курма ытларах каяссăн, кĕнеке илессĕн туйăнать. «Вăл укçа организаци тума питĕ кирлĕ пулсан?» тепĕр тĕрлĕ шухăш пырса кĕчĕ пуçа. «Çу-ук, унашкал хĕрхенме юрамасть укçана». Çапла пуçăмра шухăшсем тавлашкаласа илчĕç. Виçе-виçе пăхрăм та килĕшрĕм.

— Ĕçĕ пур-и вара?

— Ĕçĕ пур, ан ӳркенĕр кăна. Атьăр! — кăчăк туртса аллине сулчĕ вăл.

## Спекулянт патĕнчи ĕç

Эпир Микки ытлашши пакăлтатманнине хăнăхнă ĕнтĕ. Çавăнпа та вăл тепĕр хут чĕнессе кĕтмесĕр, ун хыççăн утрăмăр. Хайхискер, пире Элехван пичче патне илсе кĕчĕ. Ку пире тарăхмаллипех тарăхтарса ячĕ. Элехван пичче колхозра ĕçлеме ӳркенекен наян тата чăркăш çын иккенне ялта такам та пĕлет. Ялан вăл пасарта тĕркĕшсе тăрать, кунĕн-çĕрĕн хĕрĕнкĕ çӳрет, кӳршĕсемпе килĕштерсе пурăнмасть, е пĕринпе, е теприпе ятлаçать. Пурин кăмăлне те хуçма ĕлкĕрет. Уйрăмах, ӳсĕрĕлсен, ашшĕсĕр ачасем çумне çулăхать. Пасарта такампа çапăçса шăнăçтăрайман çиллине ачасем çине тăкать. Виçĕмкун кăна Элехван пичче Эвăна кӳрентерчĕ. «Манăн хĕрача Таня чирлĕ выртать, эсир урамра выляса çӳретĕр...» тесе пĕррех тапнă урипчен. Таня, Элехван пиччен, пирĕнпе пĕр класра вĕренекен хĕрĕ.

Элехван пичче картишне кӗрсен, Эва тарӑхса:

— Микки, мӗншӗн илсе килтӗн эсӗ ҫак усал ҫын патне?— терӗ. Микки ӑнлантарма тытӑниччен Элехван пичче пире курса кӑшкӑрса та ячӗ:

— Охо-хо! Вайгитти икӗ паттӑр тата тирпейлӗ хӗрарӑм алли пур пулсан шансах тӑр, ӗҫ малалла каять вара. Маттурсем, яланах манпа туслӑ пулӑр эсир, кӗсйӗртен укҫа татӑлмӗ.

Вӑл кӗтмен ҫӗртенех пире икӗ пысӑк йывӑҫ витре, вӗрен татӑкӗсем тупса пачӗ. Карташ варринче ларакан грузовик ҫумне вӑш-ваш пусма пырса тӑратрӗ.

— Нӳхрепрен кӑларнӑ ҫӗрулмине машина ҫине тултаратӑр,—хушрӗ Элехван пичче.— Хакӗ — пӗр витре кӑларнӑшӑн— ҫирӗм пус.

Килӗшетпӗр-и, ҫук-и, ыйтса-мӗн тӑмарӗ хӑй, хытканскер, картишӗнчен йӑшт ҫеҫ тухса ҫухалчӗ.

— Нӳхрепри ҫӗрулмине мӗншӗн машина ҫине тиеттерет-ха вӑл? — ыйтать Эва.

— Сталинграда ҫӗрулми ӑсатать тенине илтнӗччӗ эпӗ,— сӑмах хушрӑм.

Эва, куна илтсен, Микки ҫине сиввӗн пӑхса илчӗ те:

— Комсомолец те вара сана, пире спекулянта пулӑшма илсе килтӗн пулать,—тет.— Эпӗ ӗҫлеместӗп, тек самант та тӑмастӑп кунта.

Эва ҫаврӑнчӗ те хапха патнелле утма тытӑнчӗ.

— Ан васка,—ярса тытрӗ Микки Эва аллинчен.—Санӑн чӗлхӳ вичкӗн, эсӗ, тен, тӗрӗс те шутлатӑн пулӗ. Анчах ӑнлан, пирӗн юлташа пулӑшмалла.

— Халӗ пӑрахса кайсан эпир урӑх ӗҫ тупаймастпӑр,—терӗм эпӗ те.— Эва, шкулта комсомол организаци тӑвассишӗн ӗҫлӗпӗр. Ҫакна асра тыт та, шӑлна ҫырт.

Ҫынна ҫапла лӑплантарса калатӑп та, анчах хамӑн та ӑшӑм вӑркать. Паллах, ҫак спекулянт Сталинград пасарӗнче ҫӗрулмине килограмшарӑн сутса ларать ӗнтӗ, хаклӑ хакпа. Тепӗр чух пулсан пӗр утӑм ярса пусас ҫук, ҫак тӑр-урӑ ҫӳремен наян ҫыншӑн, спекулянтшӑн. Халӗ нимпе те каялла тапма юрамасть.

— Юрӗ, ӗҫлӗпӗр, комсомол йышне ӳстерессишӗн! — терӗ те Эва, пӗр витрине илсе нӳхреп еннелле чупрӗ. Тепӗр витрине ҫӗклерӗм те Эваран иртсе кайрӑм, вӑрт-варт нӳхрепе антӑм. Ҫӳле Эвӑпа Микки тӑрса юлчӗҫ. Шӑкӑр-шакӑр — пӗр витре хатӗр. Хӑлӑпӗнчен вӗрен ҫыхсан:

— Туртӑр! — кӑшкӑртӑм юлташсене. Лешсем витрене пехлетсе хӑпартаҫҫӗ. Хам стена ҫумне пурӑпа пӗр патак ҫыртӑм. Ку ӗнтӗ пӗр витре кӑларнине, ҫирӗм пус ӗҫлесе илнине пӗлте-

рет. Тепĕр витрине те хăпăл-хапăлах тултартăм. Ĕç кал-кал пырать пек. Илтетĕп, çӳлте Эва пĕчченех мекеçленет. Микки çĕрулмине машина çине çĕклет пулас. Шел пулчĕ Эвăна, хĕрхентĕм. Хĕрачана тулли витре туртса кăларма йывăр.

— Эва, ан нӳхрепе, сана кунта çăмăлтарах пулĕ,— чĕнтĕм.

Тавлашма юрататъ, айванскер. Юлашкинчен пурпĕрех çырлахать. Халĕ ĕнтĕ эпĕ вĕçĕмсĕр тулли витрене вĕренпе нӳхрепрен кăларатăп. Сисмерĕм те, манăн алă тупанĕ пулă хăмпи пек хăпаланса тухрĕ. Кун çинчен никама та шарламастăп.

— Çур машина тултартăмăр,—пĕлтерет Микки.

Темшĕн-çке алă тупанĕ каса-каса каять. Пăхатăп хăмпăсем шăтнă иккен, юн юхать. Ы-ых, ыратать. Тепле пулсан та тӳсесчех, тытăннă ĕçе туса пĕтересчех, мĕншĕн тесен пирĕн юлташа — Çемука пулăшмалла. Вăл вара хваттер илĕччĕ, пĕр тикĕс лайăх вĕренсе пырĕччĕ, унтан комсомол ретне тăрĕччĕ, Микки çав тери ăмсанакан комсомол организаци йĕркеленĕччĕ. Шухăшпа çĕкленсе хĕрсе каятпăр, пуç çĕклемесĕр ĕçлетпĕр.

Хушăран эпĕ çапах та Элехван пичче крыльци çине пăхапăха илетĕп. Алкум вĕçне унăн пирĕнпе вĕренекен хĕрĕ—Таня тухасса кĕтетĕп, пире пулăшĕ тетĕп. Пӳрт алăкĕ уçăлса хупăнмарĕ. Таня тухмарĕ, кĕтни харам пулчĕ.

Тӳпе ерипенех хăйĕн шупкине çухатрĕ. Çĕр питне тĕттĕм хупăрланă тĕле пирĕн машина тулчĕ, тек унта пĕр витре çĕрулми те кĕрес çук. Пĕлнĕ пекех Элехван пичче те килсе çитрĕ. Кăмăлĕ унăн аван, тем шӳтлесе кулкалать. Туртăшса мĕн тăмарĕ хăй, укçине туххăмрах пачĕ.

### Вĕсем ĕнтĕ иккĕн

Хваттер шыраса тупсан, укçине малтанах тӳлесе хутăмăр. Халĕ Çемука пĕлтересси çеç юлчĕ. Савăнать-тăр.

— Темĕн-ха,— тет Микки иккĕленсе.

Шкула иртерех кайрăмăр. Çемук çук.

— Атьăр, Çемука хирĕç тухса илер,— сĕнчĕ Эва.

Çулпа ытлашши инçех те каймарăмăр, Çемука хирĕç те пултăмăр. Сывлăх сунсан-тусан, хамăрăн ăшра çулăмланса тăракан сăмаха хускатрăмăр. Çапла та, капла тетпĕр, ырантан пуçласа хваттерте пурăнма тытăнан, тетпĕр. Ырă хыпар пĕлтернĕшĕн Çемук пире халь-халь ыталаса илессе кĕтетĕп. Çу-ук, ун вырăнне тарăхнă сасăпа кăшкăрса ячĕ:

— Эсир манран мăшкăлатăр.— тет, чутах пире çупса ямасть.—Ансат хваттерте пурăнма эпĕ улпут ывăлĕ мар-ха.

Айванскер, кам ăна улпут ывăлĕ тет. Улпут ывăлĕ пулсан хваттер мар, ĕнсе чикки памалла. Пирĕн вăхăтра тата мĕн

ӳлпут ывӑлӗ пултӑр? Пуян таврашне пирӗн асаттесем тахҫанах тӗп тунӑ.

Шкула ҫитсе урока лартӑмӑр. Переменӑна тухсанах — Ҫемук патне. Ун пек те, кун пек те йӑпататпӑр, яхӑнне те ямасть. Хваттере пыма сӑмах памасть те памасть. Вара Микки тӳррӗн калаҫма тытӑнчӗ:

— Шкулти пулас комсомол организацишӗн, урӑх нимшӗн те мар. Комсомол ячӗпе сана хваттере кусма ыйтатпӑр,— терӗ.

Ҫак калаҫӑва илтсен, Ҫемук кӑмӑлӗ ҫемҫелчӗ, турткалашса тӑма пӑрахрӗ. Пӗлетпӗр, ара Ҫемукӑн ҫав тери комсомолец пулас килет. Паян тесен паян комсомола кӗрӗччӗ.

Хваттере вырнаҫсан, нумай та вӑхӑт иртмерӗ, никам пулӑшмасӑрах, Ҫемук вӗренӳре пысӑк утӑмсемпе утма тытӑнчӗ. Дневникӗ ҫине умлӑ-хыҫлӑ «пиллӗк» те «тӑваттӑ» паллӑсем ларма тытӑнчӗҫ.

— Малтанах ҫакнашкал вӗренмеллеччӗ санӑн, отличник пулаттӑн,— мухтать класс руководителӗ Кузьма Афанасьевич, ӑна лайӑх вӗреннӗшӗн.

Тӑрӑшни сая каймарӗ, шанни, кӗтни умма ҫитрӗ. Ҫемука комсомола илчӗҫ. Микки савӑнать. Халӗ вӗсем ӗнтӗ иккӗн! Пирӗн шкулта икӗ комсомолец!

— Йыша тепӗр комсомолец хутшӑнсан, шкулта комсомолӑн пуҫламӑш организаци пулать!—тет Микки, йӑл-йӑл кулкаласа.

### Камӑн менельник?

Эвӑпа иксӗмӗр хамӑр класри кашни ачан менельникӗ хӑҫан пуласса пӗлтӗмӗр. Эва список та турӗ. Шел, паян-ыран никам та вунтӑваттӑ тултармасть. Часах тата ҫуллахи каникул пуҫланмалла. Чӑнах та, каникулӑн малтанхи кунӗсенчех Елиҫ вунтӑваттӑ тултарать. Ман шутпа вӑл комсомол ятне илме тивӗҫ те мар, пионер ятне янӑ. Астӑватӑп, пӗлтӗр ӑна отряд советне чӗнсе хытӑ ятланӑччӗ. Урамра выляса ҫӳрекен ачана кӳрентернӗ. Елиҫ пӗчӗк ачан тетте урапи ҫине хӑпарса ларнӑ та ҫӗмӗрсе пӑрахнӑ. Юсаса парас вырӑнне пӑрахса хӑварнӑ, ҫийӗнчен макраканскерне питне-куҫне чалӑштарса витленӗ, ӑна пуҫӗнчен чӗрнепе шак! шаккаса хӑварнӑ.

Елиҫе комсмола илес тесен те, каникул вӑхӑтӗнче шкулта никам та пулмасть. Кам ӑна рекомендаци парӗ? Дружина совечӗн членӗсем те саланаҫҫӗ.

Каникул ҫитни мана хумхантармаллипех хумхантарать. Пуҫланнӑ ҫав тери пысӑк ӗҫ татӑлса каяссӑн туйӑнать. Микки-ҫке комсомол организаци тӑвасшӑн ҫунать. Шеллетӗп ӑна. Вӑл пур, хавасла. Путех ӑна ӗмӗчӗ хӗвелле ҫутатса илӗртет пулас.

— Вăл пĕчĕккисене кӳрентернине манни вара эсĕ? — аса илтертĕм Миккине.

— Икĕ çул каялла пулса иртнĕ ĕç. Тепĕр тесен кам йăнăшмасть? Пĕрреччен улшу пусса илнине ĕмĕр асра тытмаççĕ. Елиçе комсомола илме хатĕрлемеллех.

— Мĕнле хатĕрлемелле? — ăнланмасăр ыйтатăп.

— Çаплах. Ăна ытларах ĕç хушмалла. Вăл тӳрĕ кăмăллă, ĕçлеме пултаракан пионер иккенне пурте пĕлчĕр.

— Ĕçлеме пĕлмесен е вăй çитереймесен вара Елиçе комсомола илмеççĕ-и?

— Кăмăл пулсан кашни çынах ĕçлет, вăй çитереймен ĕç ăна хушмаççĕ. Пирĕн тата тăрăшакан çынна вĕрентеççĕ, пулăшаççĕ.

Сиссе те юлмарăм, Микки мана яп! ярса тытрĕ те, эпир кĕрешме тытăнтăмăр. Хăй çаплах: «Эпир санпа пурпĕр комсомол организаци тăватпăрах», тет.

Çакăн хыççăн эпĕ ялан Елиç хыççăн çӳреме тытăнтăм. Сасартăк ĕç парĕç те, вăл пĕлмĕ, пулăшу кирлĕ пулĕ. Эпĕ хатĕр тăратăп. Ĕçленине кăтартмалла-çке. Унсăрăн тем пулас, тем килес.

Сăнатăп, сăнатăп, çынна нимле ĕç те памаççĕ. Физика учителĕ ватерпас юсама хушрĕ. Ку ĕç комсомол енĕпе мар. Пĕлетĕп, ăсталама юратнăран кăна хушрĕ ăна учитель.

Елиç хăй ăна-кăна сисмест. Тупнă вăл пĕр кăвак хупăллă кĕнеке, алăран пăрахмасть, сăнай вулать. Куç хӳрипе пăхса илтĕм те кĕнеке ятне вуларăм: «Ăмăртусем ирттермелли вăйăсем».

Микки манса кайман-ши Елиçе ĕç памалли çинчен? Аса илтерем.

— Елиç пионерсен инструкторĕ пулать. Вĕрентĕ-ха вăл сире вăйă вылямa,— тет.

— Вылямa? Мĕн эсĕ пире пĕчĕк ача вырăнне хуратăн-и?— тетĕп тарăхса.

— Каçар, эпĕ сухална хыртарнине пĕлмен те.

— Пăх эсĕ ăна, тăрăхлать. Эпĕ пур пулăшасшăн çунатăп.

— Тĕрĕс. Вăйăсем йĕркелеме пулăш эсĕ ăна, питĕ ăслă пулатăн.

Эпĕ ăна комсомол хушнă ĕç вырăнне хурса йышăнтăм. Анчах пурнăçлама май килмерĕ.

### Аслă пиччесем чĕнеççĕ

Сарăм вĕçне тухрăмăр, вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ. Ыран шкула килмелле мар. Урайне тăкăннă пăрçа евĕр сапаланатпăр. Кам ăçта... Пĕрисем канма пионер лагерне, теприсем хăнана аякри,

хулари тăванĕсем патне кайĕç. Манашкал килте пурăнакансем те пайтах. Темшĕн чун хурланса килчĕ. Пăхатăп та, Эва та тутине чăп тытнă, халичченхи пек хавас çук ун. Елиç те ӳрĕк-сӳрĕк. Вăл пӳтех ачасене вăйя хутшăнтарайманшăн кулянать пулĕ. Тепĕр класа куçнă хыпар та çĕклентермест пире. Тепĕр тесен, ку тĕлĕнтерсех те каймасть. Пурте çиччĕмĕш класа куçасси унчченех паллă пулнă. Юлашки вăхăтра япăх вĕренекенсем çукчĕ. Пуçне уснă ачасем. Мĕн пулнă-ха? Шухăшлатăп та, тавçăрса илетĕп: пĕччен тăрса юласси пăшăрхантарать вĕсене. Пĕрле мĕнешкел ырă, хаваслă. Хăраххăн мĕн тума пĕлес? Саланатпăр. Алăкран тухас умĕн курах кайрăм: стена çумĕнче илемлетсе çырнă пĕлтерӳ!

«Пионер!»

«Пионер» сăмаха хут листин çӳлти вĕçне варрине çырнă. Çак сăмаха вуларăм та хама хам чартăм. Тăхта ара, мана чĕнеççĕ-çке! Кам, ăçта? Е асăрхаттараççĕ? Сывламасăр тенĕ пек малалла вуласа кайрăм.

«Сана, хаклă пионер, илемлĕ, сар хĕвеллĕ çу кунĕсем çитнĕ ятпа саламлатпăр. Савăнăçлă каникул килсе çитрĕ. Текех ĕнтĕ эсĕ кĕркуннеччен шкула килместĕн. Ыран эсĕ килте. Мĕнле ирттерĕн-ши каникулăн малтанхи кунне? Тен, сасартăк кичем пусать? Ун пек чух канлĕ пурнăçа ан та кĕт. Чăнах та, çавнашкал инкек ерчĕ пулсан пуçна ан ус. Тепĕр кунне, пĕр тăхтаса тăмасăр, тӳрех шкула чупса кил. Сана кунта ырă ĕçсем, хаваслă вăйă-кулăсем кĕтеççĕ.

Кĕтетпĕр.

Сирĕн аслă пиччĕрсем—комсомолецсем».

Аша кайăк чунĕ пырса кĕнĕн, куçа курăнман çунатсем кар-р сарăлнăн туйăнчĕç. Эпĕ киле савăнăçлăн тухса вĕçтертĕм. Пурах-мĕн пирĕншĕн тăрăшакансем. Мĕнлерех иккен комсомолецсем! Кĕçĕн шăллĕн—пионерăн шухăш-кăмăлне таçтанах пĕлсе тăраççĕ. Аслă пиччесем чĕнеççĕ, ăçтан вĕсене итлемесĕр тăрăн?

## Тĕлĕнмелле лагерь

Каникулăн малтанхи кунне эпĕ килтех ирттертĕм. Вăхăт питĕ вăраххăн шăвать, ларас-тăрас килмест. Çапах та кăмăл ырă, тем тума та хатĕр. Чашăк-тирĕк çурăм, алкум урайне шăлтăм. Мăшăр витрене çакса шыв ăсма çырма хĕрне çул тытрăм. Пусма хĕрне çитсен, пĕр картлашкаран теприн çине шутла-шутла пусатăп. Курах кайрăм: пусма тăрăх Эва юрă ĕнрешсе хăпарать. Пĕрре пăхсах чухламалла, хăй питĕ савăнăçлă пулас. Аллинче унăн симĕс çулçăллă турат. Эпĕ юриех пуçа усрăм, хурлăхлă курăнасшăн тăрăшатăп.

— Эва,—чĕнетĕп,—сана кичем-и?

— Çук,—тет кулса.—Çав тери савăнăçлă, ха-ха. Каникул вăхăтĕнче кам тунсăхлатăр.

Эпĕ темшĕн пăшăрханса ӳкрĕм. Ун пек пулсан, ыран шкула та пымасть пулĕ.

— Эсĕ ĕнтĕ шкула каймастăн та-и? — ыйтрăм мĕскĕнле.

— Каятăп. Çавăнпа хавас та,—тет каллех кулкаласа.

Чунăм лăштах пулчĕ.

— Ыранччен!—кăшкăрчĕ те, путек-сурăх пек сиккелесе, пусма тăрăх çӳлелле улăхса кайрĕ. Эпĕ хыçран пăхса тăрса юлтăм. Ыйтса пĕлмеллеччĕ: ăçта кайăпăр-ши ыран? Тен, Атăл тăрăх пăрахутпа ярăнатпăр. Юрататăп пăрахутпа çӳреме.

Аранах кун, çĕр иртрĕ, ир çитрĕ. Манăн асанне ытла мăштăрти. Апат çимесĕр кăларса ямасть. Ăна пула намăс куртăм. Эпĕ шкула çитнĕ-çитмен ачасем кăшкăрса ячĕç:

— Авель çывăрса юлнă!

— Ыйăх чăпти!

Микки вара ăшшăн пăхса илчĕ те:

— Чăн-чăн пионерсем эсир,—терĕ.—Отрядра пĕр пионер та килменни юлмарĕ. Халĕ похода каятпăр. Килĕшетĕр-и?

Ыйтать тата. Унашкал шухăш çук пулсан, кам килтĕр кунта.

Класс руководителĕ Кузьма Афанасьевич шкул кĕлет алăкне яриех уçса ячĕ те унтан темĕскер тултарнă хутаçсем, чĕрессем, пураксем çĕкле-çĕкле тухрĕ. Кĕлет умĕнче ача урапи ларнă-мĕн. Эпĕ ăна асăрхаман та.

— Мейĕр, тийĕр, урапа çине,— вăл хушрĕ ачасене.— Майлăрах, асăрханарах хурăр.

Юлашкинчен Миккине, Елиçе, мана тата ултă ачана Кузьма Афанасьевич кĕлете чĕнсе кĕртрĕ те çурăм хыçне кутамкка çактарчĕ.

Часах эпир йĕркеленсе тăтăмăр. Колонна умĕнче тăракансене ялав тытттарчĕç. Микки отряд командирĕ пулчĕ.

Тапранса кайсан, Эва мана аякран так чышрĕ.

— Намăс мар-и сире арçын ачасене,—тет.—Пăх-ха хыçала çаврăнса. Учителе хисеплеместпĕр.

Кузьма Афанасьевич икĕ ачапа урапа туртса пырать. Тепĕр майлă шутласан, çав хĕрачасем пурне те часах тавçăрса илеççĕ. Стройран тухасшăнччĕ, чарчĕç, ахаль те кутамкка йăтса пыратăп. Ман хыçри икĕ ача учителе ылмаштарчĕç.

Ялтан тухрăмăр. Куç умĕнче вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан уй-хир. Эва юрă пуçларĕ. Ытла янăравлă çавăн сасси. Юрра хутшăнмасăр никам та юлмасть.

Вăрман хĕрне пырса çитрĕмĕр.

— Канма ларăр! — кăшкăрчĕ Микки.

Чарăнтăмăр. Кутамккасене хыврăмăр Микки, Çемук тата Елиç вăрмана кĕрсе çухалчĕç.

Ачасем шавлаççĕ, пĕр-пĕрне эпек туса чупаççĕ, мекĕлчĕк хуçаççĕ. Эва ачасене те, хĕрачасене те вăйă картине тăрататъ. Сасартăк аса илтĕм. Елиçчĕ кунта. Вăт камăн вăйă йĕркелемеллеччĕ. Эх, çав! Таçта çӳрет. Икшерĕн хире-хирĕç тăрса алсене тытрĕç, пĕри «кĕпер» айĕнчен тухать. Пурте кулаççĕ, савăнаççĕ, шӳтлĕ сăмахсем калаççĕ.

Вылянă чух темшĕн вăхăт иртни те сисĕнмест.

— Палаткăсем карма килĕр-р! — кăшкăрать Микки. Кунчул пулса та палатка карса курман. Эпир йăтса килнĕ кутамккара шыв яман палатка пулнă-мĕн. Елиç вĕтеленет кăна. Çĕр тăваткал виçсе илсе кашни кĕтессе савăл, пĕр енне вăрăм патак çапрĕç. Палаткăна кăр-кар карчĕç, савăлсенчен палаткăна кантрасемпе çыхса çирĕплетрĕмĕр. Палатка пӳрт тăрри евĕр виçĕ кĕтеслĕ пулчĕ те тăчĕ. Мана темшĕн юмахри пӳртсем шăп çакнашкал курăнса ларассăн туйăнчĕ. Пăхма пысăк та мар, ăшĕнче аслă, пиллĕкĕн ирĕклĕнех кĕрсе ларан. Юнашарах тепĕр палатка карма тытăнчĕç. Ку хутĕнче кантрисене савăл çумне эпĕ те çыхса çирĕплетрĕм.

— Вĕренĕр, ачасем, палатка карма,— тет пирĕн учитель Кузьма Афанасьевич.— Пĕр-пĕр акă ăмăрту та туса ирттерĕпĕр, курăпăр, кам чи малтан палатка карма пултарĕ.

Кăмăлтан тĕрмешеççĕ ачасем. Ӳсеççĕ те ӳсеççĕ пĕчĕк пӳртсем.

Хама эпĕ тĕлĕкре мар-ши? тетĕп. Пăхатăп та тĕлĕнетĕп, ку пуканесен урамĕ тейĕн. Çип çапнă пек тӳрĕ йĕрпе юнашарах шурă çилĕ сакăр палатка ларать. Вĕри тивесрен вĕсене патмар юмансем хăйсен тин çеç сарăлма тытăннă çулçăллă тураттисемпе çил вăркăштарса сулхăнлаççĕ.

Хăш вăхăтра-ши кăвайт чĕртме ĕлкĕрнĕ? Çĕнĕ урам вĕçĕнче, юлашки палатка умĕнче, икĕ вучах тунă та кăвар çинче, хуранта, лăкăртатса апат пиçет. Эва хыпаланать. Пăтти хуран тĕпне ларасран пăшăрханать, шурă авăрлă йĕтĕрпе пăтраштарать кăна. Аçтан чухлать пулĕ вир пăтти пĕçерме? Пĕлетĕп: амăшĕ ĕçре чух ăна пайтах апат пĕçерме тивнĕ.

Часах эпир лаштра йывăç айне, сулхăна, карталанса лартăмăр. Йывăç тирĕксем çине апат антарса пачĕç. Çу-ук, кунашкал тутлă апат хам ĕмĕрте те çисе курман.

— Эх! Çу каçипех çакнашкал пурăнасчĕ,—тетĕп эпĕ, вăрман хĕрринче тин çех пуçланнă пурнăçпа киленсе.

— Сана, Авель, лагерь килĕшет эппин? — ыйтать манран учитель.



Национальная библиотека Чувашской Республики
Ч-38439

— Çав тери!

— Палатка-пӳртсене ытармалла мар,—пĕлтерет Эва та хăй шухăшне.

— Питех килĕштеретĕр пулсан, мĕнех вара, юлма та пулать.

— Чăнах юрать-и?

Кузьма Афанасьевич шухăшне тĕплĕнех пĕлеймерĕмĕр. Çак вăхăтра пирĕн пата ялти ватă колхозник Кириле мучи пырса тухрĕ. Хăш енчен килчĕ пулĕ, ăна эпĕ асăрхаймарăм.

— Хастар йыша сывлăх сунатăп, апат тутлă пултăр-р,— терĕ вăл, туйи çине тайăнарах тăрса.

— Салам!

— Тавтапуç!—терĕмĕр харăсах.

— Правленин хисеплĕ членне тайма пуçăм,—сăмах хушрĕ пирĕн учитель те.—Тархасшăн апата килĕр, чĕнетпĕр.

— Ларас, ларас-с, апатран аслă пулма хушман.

Мучи пирĕнпе юнашар майлашса ларчĕ. Ăна часах тирĕкпе яшка, пăтă антарса пачĕç. Пĕр кашăк тутанса пăхсанах Кириле мучи апата мухтама тытăнчĕ:

— Ай-яй, тутлă пĕçернĕ. Тăвар тути те пур-р, çу куçĕсем те ишеç. Ай, тамаша-а, чутах чĕлхене çăтса ярат-тăм-м...

Эпир савăнатпăр, шавлатпăр, кулатпăр. Кириле мучи çиме чарăнсах куçне чеен вылятса илчĕ, мăйăх икĕ вĕçне те пĕтĕрсе аврĕ. Кашăкне хучĕ те:

— Сире хыпар пĕлтермесĕр, апачĕ анмасть,—терĕ.

— Хыпар?

Самантрах мучи тавра кĕшĕл пуçтарăнтăмăр.

— Калăр, мĕнле хыпар? — шăпах пултăмăр.

— Хыпар тесен, хыпарах та мар тăр-р,—ерипен пуçларĕ сăмахне, тем аса илсе.—Хĕллеччĕ-ха ун чух. Тулта си-ивĕ тăрач-чĕ-ĕ. Колхоза посылка çитрĕ. Уçса пăхатпăр-р, ай тамаша... Сап-сарă кукуруза. Кам янă? Пăхатпăр, шкул адресĕ. Çыру пур, шкул ачисем çырнă. Хăйсем ӳстернĕ çĕнĕ сорт кукуруза ярса панă. Ай, тамаша, пулаççĕ-çке çав хастар ачасем. Мĕн тăвас? Вырăнта çитĕнтернĕ вăрлăх, кăнешнĕ чаплă. Колхозниксем темиçе кун каялла сирĕн лагерь умĕнчи участока акрĕç. Малашне хамăрăн чăн-чăн вăрлăх пултăр-р, теççĕ.

Правлени вара çапла йышăнчĕ: вăрлăхлăх участокри кукурузăна ӳстерме сире хушас. Паллах, кăнешнĕ, вăл тирпейлĕ, тăрăшса тумалли ĕç. Шали-вали юрамасть. Шухăшласа пăхăр, каллĕ-маллĕ виçĕр.

Сасартăках эпир ним те калаймарăмăр, пăхатпăр е пăхмастпăр тесе те пĕлтермерĕмĕр, çавăра шыв сыпна пек, чĕнместпĕр.

Микки пирĕн çине ăшшăн пăхса йăл кулчĕ. Вăл пăхнинĕ эпĕ çапла ăнлантăм: «Мĕн, эсир хăраса ӳкрĕр-и? Паллах пăхатпăр». Вара эпĕ кăшкăрса ятăм:

— Пăхатпăр, пăхатпăр!

— Авельпе эпĕ те килĕшетĕп,— терĕ Микки.— Колхоз правлени пире çаван пек ĕç хушса панине эпĕ чыс выранне хуратăп. Эпир комсомолецсемпе пионерсем ĕçрен хăрама тивĕçлĕ мар. Çапла-и?

— Килĕшетпĕр!

— Кукурузăна хамăр пăхатпăр!

— Кузьма Афанасьевич пире кукуруза мĕнле пăхмаллине вĕрентет.

— Шкулта вĕрентнĕ вĕт!

— Вăл мĕн, урокра çеç, халĕ вара уйра, чăн-чăн кукуруза! Шăв-шав пуçланса кайрĕ. Кашниех хăй шухăшне калать.

— Ачасем тĕрĕс шухăшлаççĕ,—пĕлтерчĕ учитель.—Килĕшетĕп сирĕнпе. Паçăр кăна кунта юласшăн калаçаттăр. Кăмăла кура — телей. Эпир сирĕнпе ĕçлĕ лагерь тăвапар.

Пурăнма кăна ирĕк паччăр кунта. Йывăр пулин те ĕçлетĕп, шухăшлатăп хам.

— Юрĕ. Правление, кăнешнĕ, хавaспах пĕлтеретĕп. Ачасем килĕшрĕç тетĕп,—терĕ, ура çине тăрса, Кириле мучи.—Астăвăр-р, кураксенчен сыхлăр-р. Кукуруза халь-халь шăтса тухмалла.

Кириле мучине питĕ шантарса ăсатса ятăмăр. Каç пуласси инçе-ха. Микки сĕнӳ панипе çĕнĕ урам варне шăтăк чавса, вăрăм шалча лартрăмăр. Ун тăрне чаплăн хĕрлĕ ялав вĕлкĕштерсе хăпартрăмăр. Тĕлĕнмелле лагерь уçăлнă ятпа каçченех ывăнма пĕлмесĕр вылярăмăр.

## Юлташ пĕлтернĕ хыпар

Темшĕн-çке, пирĕн кукуруза шăтса тухмасть.

— Кая юларах акнă ăна, ĕлкĕрĕ-ха,—тет учитель Кузьма Афанасьевич.—Эсир выльăр, кулăр.

Хăй, йăпатнă май, пире, Миккипе иксĕмĕре, участока тĕрĕслеме ярать.

Ана тăрăх пыратпăр. Утнăçемĕн çĕрелле шăтарасла пăхатпăр: кукуруза çĕр айĕнчен пуçне кăларман-и?

— Часах хĕрӳ ĕç пуçланать,—калаçать çуммăн утакан Микки.—Пĕлетне, Авель, пионерсем çак ĕçре хăйсен чунне кăтартаççĕ ĕнтĕ.

— Мĕнле майпа?—ăнланаймасăр ыйтатăп.

— Кам комсомола тивĕçли тӳрех паллă пулать. Ĕçре пурте курăнать, шăллăм.

— Лагерьте пурпĕрех комсомола илместĕр вĕт?

— Илетпĕр, Авель, илетпĕр. Дружина совечĕ ĕçлет, членĕсем пурте пур. Унта, ачамушка, икĕ пионер рекомендаци ыйтса заявлени панă та.

— Камсем?

— Елиçпе Таня.

Юлташ пĕлтернĕ хыпар мана пĕр савăнтарать, пĕр хурлантарать. Пирĕн ĕнтĕ хамăрăн комсомол организаци пулать. Ку вара мана питĕ хĕпĕртеттерет. Хамăн çуралнă кун халех çитменни мана кӳрентерет.

— Тăприне чакаласа пăхас мар-и,—сĕнчĕ, пуçланă калаçăва пачах урăххи çине куçарса.

Микки чĕркуçленсе ларчĕ. Эпĕ те унпа юнашар лăпчăнтăм. Патак татăкĕ тупрăмăр та тăпрана сиретпĕр. Калча курăнчĕ. Вăл шурă тымар евĕрлех.

— Кукуруза калчи ку!—кăшкăрса ятăм. Анчах мĕншĕн асаплă ӳсет-ха вăл? Çĕр питне мар, мачча хăмине пырса перĕннĕ тейĕн, шăтарса тухаймасăр кукленсе, авкаланса ларнă. Мĕншĕн çапла-ши? Мĕн сăнанине учителе каласа парсан, хамăр тавçăрса илейменшĕн кулянтăм. Урокра вĕреннине маннă. Çĕр пичĕ ывăс пек хытса ларнă, ăна йывăç сӳрепе сӳрелемелле. Эпир çапла турăмăр та. Халĕ ĕнтĕ ĕмĕрне те манас çук. Сӳреленĕ хыççăн, тепĕр куннех, пирĕн кукуруза шăтса тухрĕ. Эпир ăна кураксенчен хытă сыхлама тытăнтăмăр.

## Савăнăçлă вăйă

— Ту-ту-ту! Итлĕр! Пурте пĕр тĕле пухăнăр!—чĕнет пире горн. Палаткăсенчен пĕри те тепри, куянсем пек, йăлт та йăлт сиксе тухатпăр. Самант та иртмерĕ, ачасем штаб умне çитсе те тăчĕç.

— Ăмăрту ирттеретпĕр! — пĕлтерчĕ пире Елиç.

Лагерьте пурăнса Елиçе аслă пичче вырăннех хума тытăнтăмăр. Тӳлек ача вăл. Хăнăхсах çитрĕмĕр ăна. Мĕн чухлĕ спорт вăййисене вĕрентмерĕ пулĕ вăл. Палатка карма, костер чĕртме тата ытти лайăх вăйăсем кăтартрĕ. Ăçтан хăй çавсене пĕлет-ха? Вăл иртнĕ çул Çĕрпӳри пионерсен лагерĕнче каннă.

— Спорт ăмăртăвĕ ирттеретпĕр-и?—ыйтатпăр эпир унтан.

— Ку ăмăртăва пурте кĕрет,—ăнлантарать пире Елиç.— Çак вăйăра çĕнтерекенсене чăн-чăн спортсменсем, туристсем, санитарсем,— теме юрать.

Елиç ăмăрту условипе паллаштарчĕ. Вăл хушнă тăрăх пи-

лёк ҫынтан команда уйӑртӑмӑр. Командӑри ачасене кашнинех хӑйне уйрӑм вӑрттӑн ӗҫ тума хушнӑ. Ҫав ӗҫе мӗн вӑхӑтра туса пӗтермеллине, ун хыҫҫӑн хӑш тӗлте тӑмаллине, мӗн кӗтмеллине, малалла мӗн тумаллине пӗтӗмпех каланӑ.

Пӗри теприн патне ҫитиччен, унта ӑна мӗн кӗтнине пӗлмест. Анчах та пирӗн кӑтартнӑ вӑхӑта, кӑтартнӑ тӗле, пилӗксӗмӗрӗн те пӗрле ҫитмелле. Ӗҫ кунпах вӗҫленмест-ха.

Манӑн вӑрманта ал туйи пысӑкӑш патак тупмалла. Чылай шыраса ҫӳрерӗм вӑрманта. Горн тутутлатрӗ. Ку ӗнтӗ ӑмӑртун чи малтанхи тапхӑрӗн вӑхӑчӗ иртсе пынине пӗлтерет. Ҫак вӑхӑтра эпӗ патак тупсӑ тухрӑм та эх чавтарма тытӑнтӑм. Пурте мана вӑйлӑрах чупма ӗшкӗртеҫҫӗ.

— Мӗн мӗшӗлтететӗн паян? — илтетӗп аякранах пысӑк юман ҫумӗнче кӗтсе тӑракан ачаран.

Пашкаса ҫитрӗм. Куратӑп, юлташ умӗнче шыв тӑп тулли тултарнӑ витре ларать.

— Чик часрах патака витре хӑлӑпне,—тет вӑлваскатса.— Атя, йӑт хӑвӑртрах, каяр!

— Ӑҫта?

— Хуран айне чӗртме ҫӑтӑр-ҫап кирлӗ.

— Ҫӑтӑр-ҫапне виҫҫӗмӗш ачи пухнӑ иккен. Вӑл пирӗнтен тепӗр аллӑ метрта тӑрать. Витрене патак варне шутаратпӑр та ӑна иккӗн йӑтса малалла чупатпӑр.

Ун патне ҫитсен витрене лартрӑмӑр.

— Эсӗ ывӑннӑ. Ил, ав, ҫӗрте выртакан ҫӑтӑр-ҫаппа,—терӗ виҫҫӗмӗш ачи.

Пирӗн тӑваттӑмӗш ачи патне каймалла. Мӗншӗн? Унта типнӗ ҫулҫӑсем иккен. Унсӑрӑн кӑвайт часах чӗртме ҫук. Виҫҫӗмӗр те малалла ыткӑнатпӑр. Ҫитрӗмӗр. Кӗтекен ача типнӗ ҫулҫӑ самаях пухнӑ. Кӑвайт чӗртме шӑрпӑк ҫук. Ку пиллӗкмӗш ачара. Татах аллӑ метр чупмалла. Пашкаса ҫитрӗмӗр. Мӗн амакӗ? Ҫӗр ҫинче Эва выртать. Икӗ урине те бинтпа ҫыхнӑ.

— Шӑрпӑк пар хӑвӑртрах!

— Шӑрпӑк ман ҫумра мар.

— Ӑҫта эппин?

— Хамӑр япаласем упранман ҫӗрте.

Эпир Эвӑна тарӑхрӑмӑр.

— Мӗн выртан, атя эппин часрах.

— Эпӗ утаймастӑп, курмастӑр-и-мӗн?

— Йӑтӑр мана,—хушать Эва. Эпӗ хӑрасах ӳкрӗм. Анчах ыйтса пӗлме вӑхӑт мар.

— Авель, ҫӗкле,— хӗтӗртрӗҫ мана.

Эвӑна ҫурӑм ҫине лартрӑм та,—(аманнӑ ҫынна ҫапла ҫӗклеме вӗрентнӗччӗ пире врач) малалла.

— Хăвăртрах, мĕн мĕшĕлтетен!
— Кая юлатпăр.
— Ĕлкĕрейместпĕр, мала тухаймастпăр.
— Горн пуласси инçе мар.
— Ут хастарлăрах!—хистеççĕ мана юлташсем.

Темрен муртан ура çакланчĕ-çке, чикеленсе ўкрĕм. Эва ман пуç урлах ыткăнса кайрĕ.

— Эх, упа!— терĕ вăл манран кулса.

Тинех тавçăрса илтĕм. Ара ку чăн мар-çке. Эва аманманмĕн. Вăййи çапла. Эвăна каллех çурăм хыçне лартатăп та малалла талпăнатăп. Хальхинче Эва пĕрре те йывăр мар пек туйăнчĕ.

Çитес çĕре çитрĕмĕр. Пирĕн чей вĕретмелле тата палатка карса лартмалла. Витрене хăпăл-хапăл икĕ юплĕ патак çине çакрăмăр та хуран айне çăтăр-çап хурса чĕртме пикентĕмĕр. Васканипе пĕтĕм ал-ура çыхланать. Эпĕ шăрпăк чĕртрĕм те çап айне чикрĕм. Çук, чĕрĕлмерĕ, çавăнтах сўнчĕ.

— Мĕн тăван эсĕ? Айванла пулса тухать!—хăр-харах кăшкăрса пăрахрĕс.— Маннă-и-мĕн, эсĕ: кăвайт чĕртме пире мĕн пурĕ те икĕ шăрпăк çеç панă, халĕ ĕнтĕ тепре çеç юлчĕ. Типĕ çулçă мĕншĕн пухнине пĕлместĕн-им?

Икĕ шăрпăк сая кайрĕ. Ку хутĕнче çулăмĕ йăлт, йăлт курăнчĕ, унччен те пулмасть шала кĕрсе çухалчĕ, тĕтĕм йăсăрланать.

— Хамах чĕртетĕп. Эсир хăвăртрах палатка карма тытăнăр,— терĕ Эва пире, вучах айне вĕре-вĕре

Хăпăл-хапăл михĕрен палатка кăлартăмăр. Вăл çĕр çине шапа пек сарăлса выртрĕ. Тăватă кĕтесри кантрисене туртса çĕр çумне çапнă савăлтан çыхса çирĕплетрĕмĕр. Мĕн ăнмарĕ? Палатка çĕкленмест.

— Йăнăшнă эсир. Малтанах умне туя çине çирĕплетсе лартмалла,— вĕрентет пире вăйă ирттерекен комисси членĕ, комсомолец Микки.

Эх, эпир те çав, мĕн вĕреннине маннă. Хăнăху çитмест тата тулăксăр хыпаланни чăрмантарать. Палаткăна тепĕр хут сўтсе лартмалла пулчĕ.

Ку темĕн хуран айĕнчи кăвайт та шартлатса çунма тытăнчĕ. Тепĕр темиçе самантран чей те вĕресе анчĕ.

Эпир хамăр карнă палатка умне чей ĕçме ларсан, тата темиçе вăхăтран, тин горн янăрарĕ. Вăхăтченех ĕçе туса пĕтерни пире савăнтарчĕ.

Пирĕн хыççăн ытти командăсем ăмăртрĕç. Вăйăра пирĕн команда иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Пурпĕрех, эпĕ питĕ хĕпĕртерĕм. Савăнăçлă вăйă, кăмăлтан вылярăм.

## Коммунист пană рекомендаци

Çерем çинче, ватă юман айĕнче, темиçе ача ларать. Вĕсем пурте дружина совечĕн членĕсем. Совет ларăвĕ пуçланмалла. Хăйсемпе юнашар пырса ларма никама та чармаççĕ. Тархасшăн, пире пурсăмăра та чĕнчĕç. Çапах пурте пыма пултараймаççĕ çав. Чылайăшсем ĕçре: кукуруза сыхлаççĕ, апат пĕçереççĕ. Эпир вара, ĕçрен пушаннисем, совет ĕçне хутшăнма пултарнăшăн питĕ хавас.

Кун йĕркинче— пурне те хумхантаракан ыйту: комсомола кĕме рекомендаци парасси.

Малтанах Таня ыйтăвне вуласа пачĕç. У-у-х, пуçланчĕ тăвăл. Пĕри апла, тепри капла калать. Пĕрисем рекомендаци парас, теприсем парас мар, теççĕ. Таня аван вĕренет. Вăл енчен илсе пăхсан, вăл комсомола кĕме тивĕçлĕ. Лайăх вĕренесси пионерăн тивĕçĕ. Комсомола кĕме ку çителĕксĕр. Комсомола малти ретри çамрăксене çеç илеççĕ. Таньăн тата ашшĕ таса кăмăллă çын пек ретлĕ колхозник мар. Вăл колхоз ĕçĕнчен пăрăнать. Ĕçке ярăннă этем. Спекуляци ĕçĕпе унта та, кунта та çӳрет. Ку тĕслĕх хĕрне комсомолка пулма чăрмантарать. Пионерăн вара çакăнпа килĕшме юрамастех. Çавăнпа пионер та вăл.

— Пионер ахаль çынах. Мĕн тăвайтăр вăл ашшĕне хирĕç? — терĕ Таня.— Вăл манăн атте-çке.

Çак сăмахсем пионерсене пушшех вĕрилентерсе ячĕç. Тӳрех паттăр пионера—Павлик Морозова — аса илчĕç.

Юлашкинчен пирĕн учитель Кузьма Афанасьевич сăмах илчĕ. «Кунта тухса каланă ачасемпе, нумайăшпе килĕшетĕп,— терĕ вăл. Çул çитни çеç комсомола кĕме çителĕксĕр. Таня хăйне обществăллă-усăллă ĕçре кăтарттăр. Ашшĕне çĕнме пĕччен йывăртарах ĕнтĕ ăна. Акă эпир тĕплĕнрех шутлăпăр та Таньăна пулăшăпăр».

Сулмаклă сăмах пулчĕ унăн. Памарĕç Таньăна рекомендаци, тăхтас, терĕç.

Иккĕмĕш ыйту — Елисĕн. Ĕç пачах урăхла. Кăмăллă. Иккĕллĕ шухăш пачах çук. Тухса калакансем пурте ырлаççĕ. Кам килĕшмест пулĕ унпа? Кукурузăна сӳреленĕ чух мĕнлерех ĕçлерĕ вăл.Ывăнма пĕлмерĕ. Ачасене ĕçре шӳтлесе те кулса хавхалантарать. Вăйăсене тата мĕнле йĕркеллĕ те савăнăçлă ирттерет! Ăмсанса кăна тăр.

Дружина совечĕ Елиçе комсомола кĕме рекомендаци пама йышăнчĕ. Тĕрĕс турĕ.

Кузьма Афанасьевич вара пирĕн чăн-чăн ырă кăмăллă учитель. Вăл Елиçе комсомола кĕме рекомендаци пачĕ. Коммунист пană рекомендаци! Мĕн тери телей. Коммунист пană

рекомендаци мĕн тери хаклă, вăл икĕ комсомолец панă рекомендацие тăрать.

Лару пĕтсен, эпир каллех Миккипе пĕрле. Савăнăçлă вăл. Мĕнле чун ан çĕклентĕр. Халĕ ĕнтĕ пирĕн шкулта виçĕ комсомолец. Шăпах организаци йĕркелеме çын çителĕклĕ.

## Хам алă çĕклĕп

Пирĕн лагерь умĕнчи ана маларах хуп-хура курăнса выртатчĕ. Юлашки кунсенче вара пачах урăхла. Аякран пăхсан вăл ем-ешĕл курăнать. Такам, эпир сисмен вăхăтра, симĕс кавир витсе хăварнă тейĕн. Кукуруза ӳснĕ. Акă мĕн. Икшер те, виçшер çулçă кăларнă. Туни парка. Пĕве те кайнă, çӳллĕшĕ, тем тесен те, шит пулатех.

Куншăн мухтансан та никам та ятлас çук пире. Ара эпир тăрăшса ĕçленĕрен килнĕ-çке-ха. Малтан кукуруза шăтайманнипе пăшăрхантарчĕ. Эпир ăна сӳрелерĕмĕр. Кун хыççăн кашни ачана аллăшар ытларах тĕп уйăрса пачĕç. Ăмăртса ĕçлеме лайăх капла.

Манăн участок хамăн туссенчен аякра. Эпир Алтаким ятлă ачапа юнашар.

Алтаким класра чи юлашки партта хушшинче ларатчĕ. Унпа тачрах калаçма тĕл те килмен. Мĕнле кăмăллă ача иккенне пĕлмен. Вăл Микки пек те, Эва пек те мар.

Пире, Алтакимпе иксĕмĕре, кукуруза анин чи аякри кĕтессине хурал тăма уйăрчĕç. Кураксем ыйăх питĕ тутлă чух, тул çутăлса килнĕ вăхăтра кукуруза тапăнаççĕ. Çывăрса кайсан, уйрăмах çав вăхăтра вăранма питĕ хĕн. Çавăнпа та Алтакимпе çĕрĕпе çывăрас мар терĕмĕр. Ыттисене чăрмантарас мар тесе палаткăран ерипен тухрăмăр. Алăра вăрăм патаксем. Çитес çĕре çитсе лартăмăр. Пăч тĕттĕм. Куçран йĕппе чиксен те курăнмасть. Юмахлатпăр, вăхăт ерипен шăвать. Анаслаттарать, çăвар карăлать. Ыйăх килет, тӳсме çук. Тăсăлса выртрăм. Часах манăн куç çине тăмана пырса ларчĕ. Тĕлĕрсе те кайрăм.

— Авель, тăр-ха. Темĕскер куçса килет кунталла,—лăс-лăс силлет мана çурăмран Алтаким.

— Мĕн? — ыйтатăп ыйăх тĕлĕшпе.

— Е усал ку, е тинĕс куçса килет кунталла. Темле хум çаптарнă пек туйăнать.

— Ăçта?

Алтаким мана сăрт çинелле, çĕрпе пĕлĕт çыпăçнă тĕле кăтартать.

— Тарар-р хăвăртрах,— хистет мана. Хăйĕн сасси чĕтренсе тухать. Чăнахах хăранă пулас.

— Алтаким, ниушлĕ усал пуррине ĕненен,— лăплантарма тăрăшатăп ăна.

— Хăр-ратăп, т-ту-упа-та,— тет.

Вăл чăнах та хăрушă япала курать-тăр. Чĕтрет, шăлĕ шаклатать.

Унччен те пулмарĕ ман юлташ лагерь еннелле тапса сикрĕ. Манăн та ыйăх таçта кайса кĕчĕ. Куç-пуç чалăрсах кайрĕ. Мĕн амакĕ? Шикленсе пăхатăп тус кăтартнă еннелле... Çил кассăн-кассăн вĕрсе илет. Чим, чăнах, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕрте, пўрт пысăкăш пичке мăкăлтатса, йăванса килнĕн туйăнать. Мĕн мыскари ку? Вулкан çапла тухмаст-ши? Хм... Ытла айванла шухăш. Тен, çĕр айĕнчен шыв кĕрлесе тухать? Кирек мĕн пултăр, вырăнтан тапранмастăп. Мăкăлтатрĕ, мăкăлтатрĕ, ман пата тўнсе килесси-мĕнĕ пулмарĕ. Çанталăк лăш пулчĕ. Питĕ лĕп сывлăш хумĕ лăпкать. Тул çутăлса килет. Çуллахи каç ытла та кĕске иккен. Вăрман енчен пĕр куракĕ килсе ман пуç тавра çавăрăнса вĕçсе иртрĕ. Ку курак разведчик пулĕ. Кăшт тăрсан кĕтўпех тапăнса килчĕç. «Ан та килĕр! Пĕр çулçă та сăхтармастăп», тесе патак вĕçне тутăр çыхса кăшлататăп.

Унталла-кунталла чупса çўресе Алтаким сехрине хăптарнă кўлепе çинчен мансах кайнă. Хĕвел çўле хăпарсан, куракçем сырăнма пăрахсан тин пычĕ ман тус.

— Пăх та кур, санăн усалу мана пĕртте тивмерĕ. Мĕнрен хăрарăн вара эсĕ? — ыйтатăп хайхискертен.

— Тем пулчĕ.

Каçхи мыскарана аса илсе тепĕр хут çав енне тинкерсе пăхрăм.

— Санăн усалу кам пулнине пĕлтĕм! Ав вăл, куратна?

— Йывăç-и? — тет йĕрсе ярасла.

— Тут-тă. Çил вĕрнипе йывăç тăрри сулланнă. Сана вăл тинĕс куçса килнĕн туйăннă. Эх, эсĕ те çав... Хăравăçшăн çўп те капан пек курăнать, тет.

— Тархасшăн ачасене ан кала. Атту вĕсем манран куласçĕ. Кузьма Афанасьевич ан пĕлтĕрччех.

— Юрĕ-çке, каламăп,— лăплантаратăп ăна.

Каçхине ахальтенех çил вĕрмен иккен. Вăл кăнтăр енчен çумăр хăваласа килнĕ. Шĕпĕртетрĕ вара. Çумăр çуни ўсентăраншăн аван-ха, нўрĕ сĕтек кирлĕ. Кукуруза ўсет. Çакăнпа пĕрлех çумăр пире ĕç те тупса пачĕ. Çумăр çунă хыççăн кукуруза тĕпĕ тавра çумкурăкĕ тапса тухрĕ, çĕр çине йĕп чикме ниçта вырăн тупаймăн.

Кукуруза çумран тасатмалла. Çитетĕп хам участок çине...

Айтăрах! Такам çум куракссн пуçĕсене татса вăтăрса тухнă. Пăхатăп. Алтакимĕн те çавах. Кам ашкăннă кунашкал?

Алтаким шырланта ларнă. Ман сасса илтсе унтан тухрĕ.

— Мĕнле ашкăннă,— терĕ вăл.— Санăн участокна çумран тасатнă. Кукуруза шыв нумайрах ĕçтĕр, вăйлă ӳстĕр тенĕ, эсĕ пур кăмăлсăр.

— Эсĕ-и вара кăна? Эх вĕтĕлти,—тетĕп ăна.—Ĕçӳ çыпçуллă пулайман.

— Çынсен йăранĕ çинче çум ашкăрса ларать. Пирĕн таса. Кузьма Афанасьевич ырлатăрччĕ.

Тек кӳршĕпе хурлашмарăм. Юлташа мĕншĕн кӳрентерес. Тытăнтăм курăк тунисене тымарĕ-мĕнĕпех тăпăлтарма... Чăнах ĕç икĕ хут йывăртарах пулчĕ, мĕншĕн тесен хăшпĕр курăк тунисене тĕпĕнченех татнă, ываçа кĕмеççĕ.

Çум çумласа пĕтертĕмĕр, кукурузăна тасатрăмăр. Вара пире Кузьма Афанасьевич пĕрле пухса малаллахи ĕçсем çинчен каласа пачĕ. Пирĕн кукуруза тавра çĕрне кăпкалатса çемçетмелле. Унтан апат памалла. Анчах шел. Колхозра имçам кӳрсе килни пĕтнĕ. Кăшт кĕтме тивет.

Каç пулас умĕн лагере темиçе çын хăварса, яла катмаксем илме кайрăмăр. Килте пулманни нумай пулать. Пурте тунсăхласа çитнĕ. Мунча кĕрес текенсем те тупăнчĕç. Вара килте çĕр выртма калаçса татăлтăмăр.

Лагере тепĕр кунне каçалапа тин çитрĕмĕр. Ирхине катмак çĕклесе хама уйăрса панă йăран çине кайрăм. Алтаким каллех хăйĕнне те, манне те пĕр кассипе кукурузăна купаланă.

Кӳршĕ мана хавас куçпа кĕтсе илчĕ. Хăпаланса тухнă аллине кăтартать. Унпа иксĕмĕрĕн йăран çинчи кукуруза ашкăрса ӳсесси çинчен çĕкленсе калаçать. Тата вăл ĕнерех темиçе тĕпе хăйĕнне те, манне те апат панă. Имçамне пĕр витрене яхăн амăшĕнне вашкăртса тухнă-мĕн.

— Эх, Кузьма Афанасьевич ырлатăрччĕ,— тет хăй.

Ĕçри юлташăма эпĕ тав тăватăп. Тĕрĕссипе илсен вăл купалани, апат пани манăн кăмăла каймасть. Ытла та тирпейсĕр купаланă. Имçамĕпе кукуруза çулçисене вараласа пĕтернĕ. Анчах та хам кăмăлсăррине кăтартмастăп, ăна кӳрентерес килмест.

Инкек куçа курăнса килмест, тесе ахаль каламан çав. Темиçе кун иртсен пăхатпăр, Алтаким апат панă кукуруза тĕпĕсем хăрма пуçларĕç. Çулçисем шурăхса типсе пыраççĕ. Хуйăх çитрĕ. мĕн пулчĕ-ши? Васкасах Кузьма Афанасьевича чĕнсе, чирлĕ кукурузăсене кăтартатпăр. Мĕнле ĕçленине, мĕнле пăхнине ыйтса пĕлчĕ.

Тĕрĕс мар апат панă. Алтаким урокра вĕреннине маннă.

Апатлантарнӑ чух кукуруза ҫулҫисене имҫампа тивертме юрамасть. Ҫунтарса янӑ. Апата кукуруза тӗпне ҫеҫ сапмалла.

Алтаким ырланине илтесшӗнччӗ, пулмарӗ.

— Эх, ачасем, чарусӑрланса патшалӑх туприне пӗтеретӗр,— тет кукурузӑна хӗрхенсе учитель.

Ҫирӗм тӗп кукуруза харать. Шутласа пӑхрӗҫ те темиҫе килограмм вӑрлӑхлӑх кукуруза ҫухалнине пӗлчӗҫ. Экскурсие пынӑ пек пӗтӗм ачасем пухӑнчӗҫ. Вӗсемшӗн мӗн, лӗкӗртетсе пултӑр.

— Ӗҫе кун пек хӑварма юрамасть,—тет Микки комсомолец,—юлташсене пулӑшмалла.

Мӗнле пулӑшмалла? Никам та ним те калаймасть.

Ачасем саланчӗҫ. Эпир Алтаким, Эва, Микки шырлан пуҫне ларса юлтӑмӑр. Хуйхӑрса ларнӑ вӑхӑтра пирӗн пата Таня пычӗ.

Кулянма хушмасть вӑл пире. «Мана комсомола илмерӗҫ пулин те хыпса ҫунмастӑп, мӗншӗн тесен комсомолка пулатӑпах», тет. Пире пулӑшасшӑн хӗрача. Килне чӗнет. Вӗсем патне кайма темшӗн чун туртмасть. Тантӑш аппӗне — Элехван пиччене — килӗштерместпӗр, путех ҫавӑнпа пулӗ. Анчах ним те тӑваймӑн. Нуша шурӑ кулач ҫитернӗ, тенӗ ӗлӗк ваттисем. Тиркештерсе тӑма юрамасть. Кайрӑмӑр.

Таня пире хӑйсен пахчине илсе кӗчӗ. Ним те калаймӑн, илемлӗ пахча! Йывӑҫ тем чухлех. Темиҫе вӗлле. Кунтах опытлӑ йӑран куртӑмӑр. Шӑкӑр-р икӗ рет кукуруза ӳсет. Ҫӳлӗ, хӳхӗм. Таня ҫӗнӗ сорт кукуруза туса илессипе пӗлтӗртенпех ӗҫлет имӗш. Калчисене парникре, хут стакансем ӑшӗнче шӑтарнӑ. Парник умне пырса тӑрсан, ӑна хамӑр куҫпах куртӑмӑр. Халӗ те ав, темиҫе хут стаканра кукуруза калчи упранать. Инкек-синкек пуласран хӑварнӑ иккен вӗсене парнике Таня. Каламасӑрах ӑнлантӑм. Ҫак кукуруза тӗпӗсене вӑл пире парнелет. Ырӑ кӑмӑллӑ хӗрача мар-и ӗнтӗ Таня? Эх, пӗр-пӗрне ытла та сахал пӗлетпӗр. Мӗншӗн ҫакӑн пек пионера комсомола кӗме рекомендаци парас мар? Тепринче хам алӑ ҫӗклетӗп уншӑн.

Парнеленӗ хут стаканти кукуруза калчисене пилӗксӗмӗр те тӑватшар тӗп йӑтса уя, хамӑр участока таврӑнтӑмӑр. Алтаким ним чӗнмест, хӑйне пысӑк айӑпа хурать.

Хӑрнӑ кукуруза тӗпӗсене тӑпӑлтарса ывӑтсан, ҫӗннине лартрӑмӑр. Ӗҫӗ вирлех лекрӗ вара. Апла пулин те пӗччен мар, Эвӑпа Микки пире шефа илчӗҫ. Таня та пырсах тӑрать. Пурне те пӗлет, вӗрентет. Эй, эй, тем тесен те вӑл агроном пулатех. Агронома ҫитеймесен уй-хир ӑсти пулӗ.

Куҫарнӑ кукуруза тӗпӗсене уйрӑм пӑхатпӑр. Ир-каҫ ӑшӑ шывпа шӑваратпӑр. Ҫӗрне яланах ҫемҫетсе тӑратпӑр. Апатне

ытларах панă. Ӑмӑртса ӳсрĕç тейĕн, юнашарти кукуруза тунинчен темĕн чухлĕ вăрăм.

Çапла иртгерсе ятăмăр ăш пиççие. Кун хыççăн Алтаким пĕрре те чăрсăрланмарĕ, пирĕнтен хăпса ĕçе пĕли-пĕлми пăсмарĕ.

Уйăх иртсен, эпир хамăр лагерьпе сывпуллашса киле таврăнтăмăр. Текех пирĕн пулăшу кирлĕ мар. Кукуруза вăй илчĕ, ăна ярăнса ӳсме ним те чăрмантараймĕ.

## Пульăпа шăтарнă хуплашка

Çĕнĕрен шкула пуçтарăннăранпа темиçе уйăх та иртрĕ. Эпир çиччĕмĕш класра вĕренетпĕр. Пирĕн класри комсомолăн пуçламăш организаци самаях ӳсрĕ. Унта темиçе комсомолец ĕнтĕ. Вунтăватă çул тултарсан, мана та комсомола илчĕç. Билет илме райкомола виççĕн: Эва, Микки, эпĕ кайрăмăр.

Хам савăнăçăма киле илсе таврăнсан ун çинчен чи çывăх çыннăма пĕлтертĕм.

— Анне, мана комсомола илчĕç. Акă комсомол билечĕ.

— Тĕрĕсех калатăн-и? Кăтарт-ха!— тет вăл.

Аллине манăн комсомол билетне илсе пăхсан, тĕлĕннипе анне шалт хытса кайрĕ.

— Ара, хăш вăхăтра ӳсрĕн эсĕ, ачам, комсомола юрăхлă пулмаллах? — тет. Хăйĕн те савăннипе, те кулянннипе куççулĕ шăпăрах юхса анать,— нумаях та пулмасть пĕчĕккĕччĕ вĕт-ха эсĕ. Тăлăх пуснă пулĕ тесе кулянаттăм та.

Анне эпĕ ӳснине ĕненмесĕр кăмака çумне илсе пырса тăратать. Унта тахçанах ман пĕв çӳлĕшне виçсе картлани пур.

— И-и-и, кур-ха ăна, мĕнлерех тăсăлса кайнă. Эх, ашшĕ çук, ашшĕ çук. Мĕн тери савăнĕччĕ. Çын пулчĕ вĕт, çын! Чимха, этем ретне тăнă ятпа сана памалли пур...

Васкасах анне арча уçать. Ун тĕпĕнчен чечеклĕ енчĕк туртса кăларать. Çыххине салтнă май хăй çаплах калаçать:

— Аçу парни, ачам. Ӑна аçу вилсен фронтран ярса панăччĕ... Чĕре çумĕнчи чи çывăх япали пулнă вăл. Чĕрине те, комсомол билетне те пĕр çăтмах пульă шăтарса тухнă. Пĕл аçу мĕнле çын пулнине. Куратăп-ха, эсĕ те ун çулĕпех утатăн. Халĕ ĕнтĕ саншăн пăшăрханма кирлĕ мар.

Пульăпа шăтарнă, хĕрлĕ питлĕ, ВЛКСМ тесе çырнă хуплашка тыттарать мана анне. Эпĕ ăнлантăм: атте çак хĕрлĕ питлĕ хуплашка ăшĕнче хăйĕн комсомол билетне упранă. Вĕсене Тăван çĕршыв тăшманĕ аллинчен тухнă вилĕм кăна уйăрнă. Хамăн комсомол билетне илетĕп те пульăпа шăтарнă хуплашка ăшне меллĕн чиксе хуратăп. Туятăп: вăл мана Тăван çыршыва

атте пекех юратма, уншăн кирек хăçан та хам пурнăçа пама хатĕр тăма вăй-хал парать.

## Таня та комсомолка

Комсорг пирĕн — Микки. Унăн хăйĕн пĕр тĕллев — класри ачасене пурне те комсомола илес шухăш. Кăçал шкула министр приказĕ килнĕ. Çичĕ çул вĕренмелли шкулта вăтам шкул пулмалла. Вăтам шкула пирĕн класс малтан кĕрет. Вăтам шкулăн 8-мĕш класне пурин те комсомолец пулса куçмалла. Комсомол класĕ теччĕр.

— Таньăна та комсомола илме хатĕрлемелле,— тет Микки.

Комсомола кĕме вăл хатĕр. Вăл хăйне ĕçре кăтартрĕ. Таньăна курсанах мана çуллахи асран кайми лагерь, хамăр çитĕнтернĕ кукуруза уйĕ, унтан пиçсе çитнĕ кукуруза пуçĕсене пухни, вĕсене темиçе пуçшарăн çыхăсем туса маччана çакни куç умне тухать. Асăннă ĕçсенче хăйне лайăхпа кăтартрĕ. Юлташсене пулăшать. Ĕç майне пĕлет. Комсомола кĕме тивĕçлĕ.

— Ашшĕ аван мар çын. Кун çинчен эсир хăвăрах пĕлетĕр, советра та каларăр,— тет Микки.—Паллах, Таня ашшĕне юсассăн, анчах вăйĕ çитмест. Çак ĕçре пирĕн комсомолецсен Таньăна пулăшмалла.

Çапла калаçнă хыççăн Таня ашшĕ — Элехван пичче колхозри стена хаçатне — йĕплĕ çăмаха лекрĕ. Колхозра ĕçлеменшĕн тăрăхларĕç. Уй-хир бригадирĕпе Микки пĕрле çырнă. Ӳкерчĕкпех кăларчĕç.

Нумаях та пулмасть комсорг, хаçатра вуласа, комсомолецсен çĕнĕ пуçарăвĕ çинчен пĕлнĕ. Вара ăна çине тăрсах хамăр хушăра сарма пикенчĕ. Шăматкун, уроксем хыççăн, комсомолецсене пухрĕ те:

— Малашне эпир милиционерсене пулăшакансем пулăпăр,— пĕлтерчĕ.—Ыран пасара тухатпăр, унти йĕркелĕхе астăвăпăр.

Хăй çавăнтах пире хулсене çыхма хĕрлĕ хăмач татăкĕсем пачĕ.

Пасара тухсан, мĕн тумаллине часах куртăмăр. Ав, вăл Элехван пичче, ӳсĕрскер, магазин умĕнче çынсемпе чăркăшса тăрать. Милиционер пычĕ.

— Çав кирлĕ ăна, милиционер тыттăр та кайтăр, ĕçĕ те пĕтнĕ,— терĕ пирĕнтен пĕри.

— Элехван пичче милицире çывăркаласа намăсне куркаланă-ха,—пӳлчĕ Микки юлташ сăмахне,—Атьăр-ха çынпа урăхларах пулар.

Милиционерпа калаçса татăлсан, эпир Элехван пиччене çавăтрăмăр та килне ăсатса хăвартăмăр. Кăмăлĕ шутсăрах çемçелчĕ вара хăйĕн, пире тав туса çитерейместь.

Темиçе кунтан эпир Миккипе ăна урамра тĕл пултăмăр. Пире чĕнсе илчĕ те ыйтрĕ:

— Таньăна ман пирки комсомола илмеççĕ тени тĕрĕсех-и вăл?

— Эсир илтни чăнах, Элехван пичче,—тавăрса каларĕ Микки.— Унăн автобиографине кăшт сулхăнласа тăратăр. Сирĕн хăвăр хĕрачуна шеллесчĕ. Вăл комсомола питĕ кĕресшĕн.

— Ну, тек эс ан вĕрент мана,— терĕ те, çавăнтах хăпса кайрĕ. Ним ăнланмасăр юлтăмăр, те çиленсе кайрĕ, те ахаль çеç çавăн пек туйăнчĕ. Тепĕр кунне тата ытти кунсенче те Элехван пиччене колхозниксем ĕçре курнă. Вăл уя торф кăларнă.

Таня пирки лайăх хыпарсем çитсе тăнă комсомол организацине. Канмалли кунсенче хĕрача ашшĕпе пĕрле хăй те уя тислĕк кăларнă çĕрте ĕçлет. Урăх мĕн кирлĕ тата? Пулас комсомолка ашшĕне колхоз ĕçне таврăнма пулăшнă. Çавăн пек сынсем кирлĕ мар-и вара комсомола? Шăпах çавăн пеккисем — ĕçченнисем кирлĕ. Кĕтнĕ вăхăт çитнĕ, халĕ Таня та комсомолка.

## Пирĕн Эва

Микки ĕмĕчĕ хуллен пурнăçа кĕрсех пырать. Пирĕн класри ачасенчен халĕ камăн кăкăрĕ çинче комсомол значокĕ çуталса тăмасть? Пĕртен-пĕр хĕрачан çеç. Эвăн. Унччен пекех Эва мăйĕнче виçĕ кĕтеслĕ хĕрлĕ галстук. Анчах та Эва чунĕпе те, ĕçĕпе те тахçанах комсомолка. Вăл хĕрача пирки пăшăрханма кирлĕ мар. Çулĕ çеç çиттĕр. Вара комсомол ретне тăратех. Шкулти чи пултаруллă санитарка пулнăшăнах ăна комсомолка теес килет. Çавăнпа та шкул аптекине унăн аллине шанса панă. Пӳрнене кассан-тусан Эвăран меллĕрех никам та çыхса яма пултараймĕ. Эх, мĕн каласси пур. Малтанхи пулăшу пама пĕлесси питĕ кирлĕ ĕç. Малтанхи пулăшу пама пĕлмен пиркиех пирĕн класри Çемук инкек курса ларнă. Каласа парам.

Пурте аванахчĕ. Коридорта пĕчченкисене вăйă выляттарат-тăмăр. Пысăк перемена вăхăчĕ-çке. Чипер вылянă çĕртех пирĕн класра хыттăн йынăшни илтĕнчĕ: кам-ши? Микки, Эва класа чупса кĕтĕмĕр. Аптечка умĕнче Çемук йынăшса, макăрса ларать. Пăхатпăр, унăн ура пичĕ хĕрлĕн-саррăн курăнать. Мĕн пулнă? Акă мĕн пĕлтĕмĕр эпир: Çемук класра дежурнăй. Вăл кĕленчере чернил пĕтнине сиснĕ. Чернил бутылкине илет те кухньăна каять. Унта пысăк хуранта шыв сиксе вĕресе тăрать. Курка илсе вĕресе тăракан шыв ăсать. Мелсĕр тытнă пуль-и куркине? Шывĕ ура çине шăпăрах тăкăннă. Каялла класа уксахласа чупса пырать. Тӳсейменнипе пушмакĕпе чăлхине хывать. Вара ӳчĕ хĕрелсе, шурă хăмпăллăн хăпаланса тухнине

курать. Çемук суранне мĕнле сиплемеллине пĕлмен. Ыратнипе ним тума аптраса аптечкăран иод илет те урине, пĕçертнĕ вырăна сĕрет. Чухла ĕнтĕ, мĕнлерех ăшаланнă унăн ури. Юрать, Эва маттур, тавçăруллă хĕрача. Самант марганцовка ирĕлтернĕ шывпа Çемук суранне сăтăрса, вазелинпа сĕрсе, бинтпа майласа çыхрĕ. Кайран та, ытти кунсенче, Çемук урине эмеллесех, бинтне улăштарсах çыхса тăчĕ.

Тĕлĕнеççĕ пирĕн Эвăран, ал-ури сыпçуллă пулнинчен. Ăçтан ăнкарать-ха вăл медицина ĕçне, теççĕ. Кунта сăмахĕ те пĕрре çеç: чăн-чăн пионер вăл. Пионерăн законĕ çавнашкал: нумай ырă ĕçе пĕлме тăрăшмалла. Ахальтен мар вăл каникулта, пушă вăхăтра, медпунктра. Врачсем, тăрăшнине кура, ăна ĕç майне вĕрентеççĕ. Пурне те пĕлме тăрăшмасан ăçтан малта пыракан çамрăксен ретне тăран.

Çапла пирĕн Эва. Шанчăк парать. Вăл комсомола кĕрсен пирĕн класс — комсомолецсен класĕ пулать.

Миккипе иксĕмĕр шухăшлатпăр: Эва пирĕнтен чи çамрăкки, хамăр отрядри пионерсенчен чи кĕсĕнни. Халь ĕнтĕ унăн комсомола кĕме çул çитнĕ, кăна ĕмĕр манми пăллă тăвас. Класра пĕтĕм ачасемпе — комсомолецсемпе Эвăн менельникне ирттерес. Тĕрĕссипе илсен, çав кун эпир хамăр ачалăхпа сывпуллашни пулать. Мĕншĕн тесен отрядпах çĕнĕ пусăма, çӳлĕрех пусăма куçатпăр.

Пирĕн шухăшпа комсомолецсем килĕшрĕç. Эвăн менельникĕ çитесси пĕр эрне юлсан, пуçланчĕ хĕрӳ ĕç. Менельнике ирттерме апат-çимĕç кирлĕ. Асăнса пурăнма мĕн те пулин пама парне хатĕрлемелле. Тата тутлă çимĕçе мĕнрен пĕçермелле-ха? Ку питĕ пысăк ыйту. Халиччен кам хăна пăхса курнă? Паллах, никам та. Хĕрачасем вĕри çатма çинчи пек ăшталанаççĕ, пĕтĕмпех хыпăнса ӳкрĕç. Ăс паракан кĕнеке шыраççĕ, календарь листисене уçа-уçа хупаççĕ. Ăна-кăна пĕçерме сахăр, çу, çăнăх, çăмарта туянассĕ, е кам та пулин килтен илсе килет. Пĕр икĕ кун пĕçерчĕç. Мухтанаççĕ хăйсем, чĕлхĕрсене çăтса ярăр, теççĕ. Хутран-ситрен пире кăпăшка пиçнĕ печени тутантарса пăхтараççĕ. Чăнах та питĕ тутлă. Пире çитмест, ыйтатпăр, ытлараха хапсăнатпăр.

Тӳсейми кĕтнĕ кун çитрĕ. Эвăн менельникĕ. Шăпах канмалли кун килчĕ. Класран парттăсене кăлартăмăр. Урай варне, темиçе сĕтел юнашар лартса тухрăмăр. Вĕсем çине хаçат витсен, тултарчĕç апат-çимĕç лартса! Мĕн кăна çук-ши? Кукăль, хуплу, торт, печени, пылак чей, татах тем те пĕр. Хăнана учительсем те пынă. Унччен те пулмарĕ, Эва ячĕпе саламсем килме тытăнчĕç! Учительсем, юнашар класри ачасем, шкул директорĕ саламлать. Комсомол райкомĕ Эвăна обществăлла-усăллă ĕçе

активлăн хутшăннăшăн, çуралнă кун ячĕпе саламласа Хисеп грамоти ярса панă. Эпир, Миккипе иксĕмĕр, Эвăна фанертан касса-тĕрлесе ăсталанă питшăлли çакмалли парнелерĕмĕр. Парнийĕ чаплах мар та, анчах эпир ăна илемлĕ тăвассишĕн нумайччен тăрăшса ĕçлерĕмĕр.

Сăнатăп, сăнатăп та хама хирĕç ларакан Эвăна, темшĕн вăл пĕрре те халичченхи пек мар. Ун черкке пек куçĕ хĕрелсе, йăмăхса тăрать. Апла-капла шухăшламарăм, хумханнипе пулĕ, терĕм. Шухăшлама вăхăт та пулмарĕ. Ăçта унта! Сĕтел тулли тутлă çимĕç илĕртет. Часах вăйă, ташă-кулă пуçланчĕ. Радиола янраттарма пуçларĕ. Кунашкал савăнăçлă вечер пирĕн нихăçан та пулман.

Тепĕр кунне пире инкек кĕтнĕ. Шкула врачсен комиссийĕ килчĕ. Тытăнчĕç кашни ачана тĕрĕслеме... Кăкăрне шаккаса итлеççĕ. Çăвара картараççĕ, хăлха хыçĕсене, мăйри тымарсене хыпашлаççĕ, куçа тавăрса пăхаççĕ. Ачасем сывлăхлă пулнăшăн савăнаççĕ. Анчах сасартăк ырă мар хыпар илтетпĕр:

— Эвăн куçĕ трахомлă.

— Трахомлă? — ыйтрĕ ĕненмесĕр Микки.— Апла пулсан эпир Эвăна комсомола илме пултараймастпăр,—персе ячĕ.

— Мĕншĕн? — хыттăнах каларĕ такăшĕ.

Эва, ăна вĕри шывпа сапнă пекех, парттă хушшинчен сиксе тăчĕ те, пуçне чиксе класран чупса тухса кайрĕ.

Мĕн пулса иртнине лайăххăн сиссе те юлаймарăмăр.

— Ăçта кайрĕ вăл, урок пуçланас умĕн? — ыйтрĕ Таня. Анчах ыйту çине никам та тавăрса калаймарĕç.

Урок иртсен тин эпир ăнлантăмăр. Микки хĕрачана тӳрккес каласа кӳрентернĕ. Тĕрĕссипе илсен, чăнахах та ĕнтĕ, комсомолеца трахом пурри килĕшмест. Çапах та çынна çепĕç калама пулать-çке. Эпир кăшт хамăр хушăра ятлаçкаласа илтĕмĕр.

Каçалапа Миккипе Эва патне кайрăмăр. Микки каçару ыйтасшăнччĕ унтан. Кăлăхах пулчĕ. Эва питĕрсе хунă та урам хапхине уçма тухмарĕ. Хуйăха ӳкрĕмĕр. Пĕрремĕшĕнчен—чи çывăх çынна кӳрентернĕшĕн; иккĕмĕшĕнчен — тăван класс комсомолецсен класĕ пулайманшăн.

Эва тепĕр кунне те шкула пымарĕ. Эпир хыпăнсах ӳкрĕмĕр. Микки ăна ытлашшипех çапса хуçрĕ пулас, е чирлесе ӳкрĕ? Темиçе кунтан тин куртăмăр. Пурпĕрех, калаçмарĕ вăл, пăрăнать пирĕнтен. Хăй те кулянать пулĕ. Çав тери таса хĕре ăçтан çыпăçнă усал чир? Çитменнине хăй санитаркă-çке, шкулта санпост начальникĕ.

Шутпа унăн мана çиленме сăлтав та çук. Каям-ха килне, терĕм. Ашă кăмăлпах йышăнчĕ. Амăшĕ таçта тухса кайнă. Чылайччен юмахласа лартăмăр.

Эвăн кукамăшĕ пур. Вăл урăх ялта пурнать. Иртнĕ кунсенче кукамăшĕ хăнана пынă. Пит çусан карчăк мăнукĕн таса шурă питшăллине илнĕ те шăлăннă. Кам пĕлнĕ кукамайăн куçĕ трахомлине? Ватă çын, çавăнпа унăн куçĕ пăсăк, тесе шутланă. Ахаль каламаççĕ çав ваттисем, инкек куçа курăнса килмест, тесе. Çамрăк ача куçне чир часах ернĕ.

Кун хыççăн кун шăвать. Эвăпа Микки хушшинче килĕшӳ çыхăнмасть. Медпункта вăрттăн кайса Эва чирĕ епле иртсе пынине пĕлсех тăратпăр. Çийĕнчех эмеллеме тытăннине кура Эвăн чирĕ часах иртрĕ. Кун çинчен пĕтĕм класс пĕлсе тăрать. Ĕнтĕ Эвăн рекомендацисем илсе комсомола кĕме Комитета ыйту çырса памалла. Эва пур хăнк та сикмест. Пурте пăшăрханатпăр. Тепĕр уйăхран вĕренӳ çулĕ вĕçленет. Капла пирĕн тĕллев, ĕмĕт сая кайĕ. Тĕллев пирĕн пурин те пĕрре: çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухса, саккăрмĕш класа пурте комсомолец пулса куçас.

— Микки, эсĕ комсорг. Ӳкĕтле кĕрт Эвăна. Мĕншĕн тытăнса тăрать вăл? — теççĕ комсомолецсем.

— Туслăх та пулăшмасть-и вара? — хушса хурать пĕри. Айвансем. Туслăх пăсăлман-тăк пирĕн класс ĕнтĕ комсомолецсен класĕ пулатчĕ.

Эва çаплах ним те шарламасть. Миккипе те калаçмасть.

— Сана эпир комсомол ячĕпе хушатпăр, Эвăпа мирлеш,— теççĕ Миккине комсомолецсем. Пире хамăра та Эвăсăр кичем. Ӳретпĕр икĕ тунката. Эва калаçма та, шӳтлеме те пĕлекен хĕрача. Микки мир тăвасшăн çунать, анчах майне тупаймасть. Класĕпе сăнаççĕ Миккипе Эвăна.

Куçĕ юсансан икĕ эрнерен эпир комитетра Эвăн ыйтуне пăхса тухрăмăр. Кам хирĕç пултăр? Çав таранччен эреветлĕ хĕрачана ăçтан комсомола илмĕн. Пухура пĕри ыйту пачĕ:

— Мĕншĕн комсомола кĕрессине вăраха тăсрăн?

— Хама çапла сăмах патăм: комсомола кĕриччен хама та, кукамая та трахомран сыватас.

Ав мĕнле. Эва сывални паллă, куçĕ унăн малтанхи пекех таса.

Ăслăскер пирĕн юлташ. Савăнатăп. Эпир каллех виççĕмĕр туслă. Комсомол билетне илме райкомола каллех пĕрле кайрăмăр. Вăл шăп вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ, пире пурсăмăра та вăтам шкула — саккăрмĕш класа вĕренме куçарнă кун пулчĕ. Килес çул пирĕн класа комсомолецсен класĕ, тесе чĕнĕç. Халĕ, кану кунĕсенче, хамăр комсомол ятне ахальтенех илменнине ĕçпе кăтартса парăпăр. Пире каллех кукуруза уйĕ кĕтет.

*Январь — декабрь 1958 ç.*

Цена 50 коп.